Чебоксарская Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 6 ШĂМАТКУН 180 (4993) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать. ВКП(б)-н Чăваш Обкомĕпе Чăваш АСС Республикĕн Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—55, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ

ÜКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран сылтăмала): З. А. Андрейĕвă (Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ), Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум членĕсем (çÿлти ретре): А. М. Краснов (Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиум Председателĕн Заместителĕ), Г. И. Иванов, Т. А. Ахазăв, П. А. Белоруссăв, И. Н. Никифорăв, В. М. Шишкин, А. С. Толстов; (аялти ретре): П. М. Матвейĕв (Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕн Заместителĕ), И. В. Дубăв, Н. М. Çеменăв, С. Р. Родионăвă, Ф. Д. Зашчелкин, К. А. Бычковă, Г. М. Гусĕв (Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ) тата Ф. Йа. Смирновă.

Тĕп пултăр фашисăм!

Типографири рабочисен, Чăвашгиз, Полиграфтрест тата пичет работникĕсен митингĕ йышăннă резолюцийĕ

Епĕр, типографинчи рабочисем, служащисем, инженерла-техникла работниксем тата Пичет çуртĕнчи работниксем Йапони военщинин тăвакан провокацисене хирĕç чĕререн тарăхса протеслетпĕр.

Фашиссем Совет Союзне курайманççĕ, вĕсем пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен тăван çĕршывне—ССР Союзне хирĕç вăрçă хатĕрлеççĕ.

Фашисăмăн урса кайнă тискер йыттисем Испанири тата Китайри халăха вĕлереççĕ, вĕсене ку сахал, вĕсем тата социалисăмлă çĕршыва —ССР Союзне вăрçа кĕртсе йарасшăн провокаци тăваççĕ. Анчах ирсĕр фашиссем пысăк йăнăш тăваççĕ: епĕр йунанисенчен тата провокацисенчен хăрамастпăр. Епĕр хамăрăн аслă тăван çĕршыври мĕн пур халăхсем пекех хамăрăн йуратнă сулпус Сталин йулташ сăмахĕсене тепĕр хут калатпăр:

— Епĕр миршăн тăратпăр тата мир ĕçĕшĕн ĕçлетпĕр. Анчах епĕр пире йунанисенчен хăрамастпăр, вăрçă чĕртсе йаракансем çапни çине çапнипех ответ пама хатĕр тăратпăр!

Пирĕн мухтавлă пограничниксем ирсĕр самурайсене татăклă отпор парса вĕсене советăн таса çĕрĕ çинчен кăларса ывăтас пирки епĕр пĕртте иккĕленместпĕр.

Епĕр пирĕн большевикла парти тата совет правительстви пĕрре чĕнсенех пурте пĕр çын пек кар тăрса социалисăмлă тăван çĕршыва хÿтлеме тăрăпăр. Епĕр кирек хăш вăхăтра та верстаткăна тата перона хĕçпăшалпа, винтовкăпа, пулеметпа улăштаратпăр. Вăл хĕçпăшалпа хамăрăн пархатарлă Хĕрлĕ Çара пулăшса тăшмана вăл ăçтан килнĕ çав территори çинчех çапса аркататпăр. Çакна Йапони, Германи тата Итали фашисĕсем асра тытса тăччăр!

Вăрçă пуçаракансене ответлесе, епĕр тăван çĕршывăн хăватне, оборонă пултарулăхне тĕреклетессишĕн тата ытларах кĕрешетпĕр, çар ĕçне вĕренетпĕр, халăхăн мĕн пур тăшманĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтеретпĕр. Епĕр коммунисла парти тавра, халăхсен йуратнă сулпуçĕ Сталин йулташ тавра та та тачăрах пĕтĕçетпĕр.

Тĕп пултăр фашисăм!

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ тата унăн аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Совет сучĕ—халăх сучĕ

Августăн 10-мĕшĕнче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш çессийĕ пухăнать. Çессри сÿтсе-йавман пысăк ыйтусенчен пĕри—суд çинчен çĕнĕ Положенине çирĕплетесси.

Суд ĕçне пирĕн партипе правительствă йаланах пысăккăн хакланă, хакласçĕ те. Пирĕн Совет сучĕ халăх хисепре. Ăна совет халăхĕ суйлать, мĕншĕн тесен: совет сучĕ—халăх сучĕ.

Совет сучĕ гражданăсене тăван çĕршыва, социалисăм ĕçне, халăх пурлăхне йуратма, социалисăмлă саккунсене хисеплеме, социалисăмлă пурнăçа йĕркелесе тытма вĕрентет. Совет сучĕ гражданăсене ĕçлев дисциплинине, социалисăмлă пурнăç йĕркисене тытма, общĕствăшăн туслă тăвас йĕркисене тÿррĕн тума хăнăхтарать.

Пирĕн суд—тÿрĕ, тĕрĕс ĕçлекен суд. Правосудине пурнăçа кĕртсе парса, пирĕн суд совет стройне, социалисăмлă хуçалăха, социалисăмлă харпăрлăха сыхлать, халăхăн тăшманĕсемпе çирĕппĕн кĕрешет. Совет сучĕн задачи—Сталинла Конституци гражданăсене панă правасемпе интерессене, государствă учрежденисен, предприйатисен, колхозсен, коопераци тата ытти общĕствăлă организацисен прависемпе интересĕсене çирĕп сыхласси.

Пирĕн суд тĕнчери чи демократиллĕ Конституци тăрăх ĕçлесе пырать. Çавăн пекех пирĕн суд та тĕнчере чи демократиллĕ суд пулса тăрать. Çакна уйрăмăнах Сталинла Конституцире кăтартса панă. Ăна паянхи кунăн ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессинче пăхса тухма тăратнă суд ĕçĕн çĕнĕ Положенийĕнче аванах куратпăр. ССР Союзĕн Конституцийĕн 109-мĕш статйине пăхăнса тăрса, „Суд ĕçĕн Положенин" пройектĕнче: судсем—халăх судйисене тата халăх заседателĕсене—гражданăсен пурне те тивĕç, тÿрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа суйлаççĕ,—тесе çырнă.

Пирĕн Совет Союзĕнче кашни сасăлама пултаракан гражданин судйа пулма пултарать. Правосудие пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре çавăн пек демократисăма тĕнчере урăх ниçта та курма çук. Вăл пирĕн çĕршывра çеç.

Капиталисла çĕршывсенче судйасем—чиновниксем. Фашисла государствăсенче судйасене суйлама пăрахнă, анчах вĕсен судйисем пурте—фашиссем лартнă чиновниксем. Вĕсен сучĕ—рабочисене, ĕçсыннисене хĕсмелли, пусмăрламалли хĕçпăшал. Капиталисла çĕршывсенче судйа должнăçне пуймалли, тупăш илмелли вырăн. Англире судйа должнăçне сутас йăла ĕмĕртенех пырать. Буржуалă демократиллĕ государствăсенче хут çинче çырнă тăрăх суд ĕçне уççăн пăхса пымала. Анчах вăл хут çинче çеç. Вĕсен суд пыракан залисене рабочисем, ĕççыннисем кĕреймеççĕ. Фашисла государствăсенче суд ĕçне уççăн тăвас йĕркене пĕтĕмпех пĕтерсе пыраççĕ.

Совет Союзĕнче пур судсем те хăйсен ĕçĕсене, саккунпа урăхла кăтартса паман чухне, уççăн пăхса иртереççĕ, айăпланаканăн хăйне хÿтĕлеме права пур. Çакăн çинчен калать Сталинла Конституцин 111-мĕш статйи.

Конституцин 110-мĕш статйинче çапла каланă тата:

„Суд ĕçне союзлă йе автономлă республикăн йе автономлă облаçăн чĕлхипе туса тăраççĕ, вăл чĕлхене пĕлмен çынсене ĕç материалĕсемпе куçаракан урлă тĕплĕн паллаштармала тăваççĕ, çавнашкалах тата судра кашнине хăйĕн тăван чĕлхипе тухса калама права параççĕ". Çакăн пек правасемпе пирĕн çĕршыври гражданăсем çеç усă кураççĕ.

Сталинла Конституци судйан авторитетне çÿле çĕклерĕ. Конституцин 112-мĕш статйинче çапла çырнă:

„Судйасем никама та мар, саккуна çеç пăхăнаççĕ". Пирĕн çĕршывра пĕр саккунлăх кăна хуçа пулса тăрать—вăл социалисăмлă саккунлăх. Çак саккунлăха пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре—суд органĕсенче—халăх шаннă çынсем, парти ĕçне паранна çынсем çеç ĕçлеме тивĕçлĕ.

Совет Союзĕнче халăх судйисемпе халăх заседателĕсене суйлас кампани пулса иртмеле. Вăл вăхăт инçех мар. Ку суйлав—питĕ пысăк политикăлă ĕç. Вăл ĕçе иртерме халех хатĕрленме тытăнас пулать. Суд ĕçне чи лайăх стахановецсене, ударниксене, çĕршывăн чи аван çынĕсене—партире тăракан тата партире тăман большевиксене хутшăнтарас пулать.

Сталинла Конституци судсенчен хăйсен ĕç пахалăхĕсене темĕн чухлех ÿстерме ыйтать. Анчах калас пулать, судсем пур çĕрте те пирĕн çĕршыв ыйтнă пекех ĕçлесе пыраймаççĕ-ха. Судсен ĕçĕнче çитменлĕхсем сахал мар: тĕрĕс мар суд тунисем, саккуна пăсни, ĕçе пăхса тухассине вăраха чăсни, волокитă, судсем ĕççынни массисемпе çителĕклĕ таран тачă çыхăнманни т. ыт. те. Халăх сучĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, çак çитменлĕхсене татăклăнах пĕтерсе пымала. Партипе совет организацисен вырăнсенче судсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтерсе пырас ĕçре тивĕçлипех пулăшас пулать. Уйрăм районсенче совет организацисем çакна ăнланасшăн мар. Пирĕн республикăра 11 участкăра судсем валли çуртсем çук: Ĕсмел, Тутаркас, Йетĕрне, Çĕмĕрле, Елĕк т. ыт. çĕрте те.

Турайри (Тутаркас р.) суд акă мĕнле çуртра ĕçлет: кивĕ пÿрт, урайĕ шатăк-шатăк. Çÿлтен шыв анать. Судăн канашлу иртермелли пÿлĕм çук. Свидетелĕсене тула кăларса йараççĕ.

Йетĕрнери 2-мĕш участкăри (Уйкасри) судăн çурчĕ кунтан та „чаплăрах". Суд пилĕк стеналă çуртра вырнаçнă. Пĕр пуçĕнче суд, тепĕр пуçĕнче конюхсем пурăнаççĕ. Урăх пÿлĕмсем çук пирки суд канашлу тума конюхсен пÿлĕмне кайать. Кун пек тĕслĕхсем пĕрре иккĕ кăна мар. Суд ĕçне хакламаннипе татăклăнах кĕрешмеле.

Партипе совет организацисем умĕнче ответлă задачă тăрать: вăл суд ĕçне тивĕçлĕ кадрсем суйласа илесси. Судсен аппарачĕсенче йурăхсăр çынсем çук мар. Халиччен тăрă шыв çине кăларман тăшманла çынсем те пулма пултараççĕ. Суд ĕçне политикă тĕлĕшĕнчен тĕрĕс ленĕ, ĕçре тĕрĕсленнĕ çынсене, тăван çĕршыва, парти ĕçне, Ленин—Сталин ĕçне паранна çынсене, халăх хушшинче авторитет пур çынсене суйласа илес пулать.

Халăх сучĕсемпе заседателĕсен çитес суйлавĕ—рабочи клас диктатурин органĕ пулса тăракан совет судне татах вăйлăрах çирĕплеме май парĕ. Аслă Октаберте çĕнсе илнине Сталинла Конституцире çырса хунă çĕнтерÿсене совет сучĕ тата тимлĕреххĕн сыхлĕ. Çакна кĕтет совет судĕнчен пирĕн социалисăмлă тăван çĕршыв.

Хасан кÿлли районĕнчи тытăçусем пирки

Августăн 4-мĕшĕнче Йапонин Мускаври послĕ г. Сигемицу Йут çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Литвинăв йулташ патĕнче пулнă, Хасан кÿлли районĕнчи тытăçусем çинчен сăмах тапратса, вăл çапла каланă: Йапони правительствин „инцидента" мирлĕ йĕркепе, локальнăй йĕркепе татса пама кăмăл пулнă, тенĕ. Çавăнпа та хăй правительстви хушнă тăрăх посол вăрçă ĕçĕсене иккĕ йенчен те пĕтерсе лартма тата ыйтăва дипломатиллĕ калаçусен рельсисем çине куçарма сĕнет.

Литвинăв йулташ, Йапони правительствин чăнах та мирлĕ кăмăлсем пулнă пулсан, Йапони çар влаçĕсен ĕçĕсем çав кăмăлсемпе пĕрре те килĕшÿлĕ мар, тенĕ. Совет чикки урлă хĕçпăшалсемпе тапăнса каçнине тата çĕрле артиллерипе усă курсах совет чиккин застави çине тапăннине мирлĕ ĕç сем тесе иронилĕ, кулса кăна калама пулать. „Инцидент" çав ĕçсе не пула кăна тухса тăнă тата вĕсем пулман, инцидент та пулман пулĕччĕ. Йапонецсем совет территорийĕ çине тапăнма та та ун çине персе тăма пăрахсан тата хăйсен çарĕсен халь те совет территорийĕ çинче йулма пултарнă йулашкисене чĕнсе илсен, вара совет çарĕсен те ответлă вăрçă ĕçĕсене туса пыма сăлтав пулмĕ, вара совет правительстви Йапони правительстви пама шухăшлакан сĕнÿсене дипломатиллĕ йĕркепе сÿтсе йавма хатĕр пулĕ. Анчах, малтан совет чиккине—Хунчунри килĕшÿпе тата ун çумне хушса хунă картăпа палăртса çирĕплетнĕ совет чиккине пырса тĕкĕнмеле мар тăвас пулать.

Посол çапла каланă: епĕ чикĕ çинчен тата ку йе тепĕр йенĕн ответлăхĕ çинчен паракан тавлашăва çĕнĕрен пуçласа йама шутламастăп, мĕншĕн тесен ку тĕлĕшпе иккĕ йенĕн те пĕтĕмĕшлĕ тĕлле шухăш çук, тенĕ. Вăл çĕршывсен хушшинче договăрсен вăйне йышăнать, анчах Китайран уйăрăлнă хыççăн Манчжоу-Гон хăйĕн даннăйĕсем пур. Хунчунри килĕшу çумне хушса хунă картăна Йапони халь пуçласа курнă. Çавăнпа та инцидента çав картă тăрăх татса парас тени тĕрĕс шухăш мар. Çапах та, Йапони правительстви договăрпа картă çинчен вырăнта конкретлă калаçусем пуçлама хатĕр. Йапонипе Совет Союзĕ хушшинчи чикĕне тĕплĕн палăртасси çинчен халиччен те калаçусем пынă тата хутăш комиссисем тăвасси çинчен килĕшÿ тунă пулнă. Ĕç çине картăсем тăрăх кăна пăхас пулсан, хутăш комиссисем çинчен калаçма та кирлĕ пулман. Халь вăрçă ĕçĕсене пĕтерсе лартасси çинчен та та çĕнĕрен ийулĕн 11-мĕшĕнчен пулнă пек лару-тăру туса хурасси çинчен практикăлă калаçас пулать.

Кун пирки Халăх Комиссарĕ çапла каланă. Государствăсем хушшинчи чикĕсене çĕршывсем хушшинчи килĕшÿсемпе картăсем тăрăх кăна палăртса çирĕплетеççĕ, ку ĕçе уйрăм правительствăсемпе çар çыннисен ушкăнĕсен субйективлă шухăшĕсемпе кăмалĕсем тăрăх йе официаллă мар даннăйсем тăрăх тумаççĕ. Совет йенĕ тăратнă официаллă документсене хирĕç Йапони йенĕ хăйне урăх чикĕ кăмала кайни çинчен каларĕ, унсăр пуçне урăх нимĕн те тăратмарĕ. ССР Союзĕпе Манчжоу-Го тата Корейă хушшинчи чикĕ вăл—Китай правительствипе тунă килĕшÿсемпе тата договăрсемпе, вĕсен çумне хушса хунă картăсемпе палăртса хунă чикĕ пулса тăрать, урăхла чикĕ пулма пултараймасть. Манчжурийĕ Йапони вăйпа кĕрсе йышăнни Йапонине чикĕсем улăштарма права памасть. Кирек мĕнле пулсан та, совет правительстви чикĕне пăхса тухассипе килĕшмен те тата килĕшес те çук. Китай правительстви алликче пулнă тата Манчжоу-Го алликче пулма тивĕçлĕ картăсем Токиора çук пулсан, уншăн епĕр айăплă мар. А вĕсем чăнах та çук пулсан, вара посол, паллах, çав договăрсемпе картăсен копийĕсене пăхса тухма пиртен ыйтма пултарнă, анчах Йапони çарĕсем тÿрех ĕçпе (çапăçупа) тытăнас çул-йĕре маларах хучĕç, картă çинче кăтартса хунă йĕр урлă каçса кĕчĕç. Совет правительстви хăй кăтартса хунă паллă условисем тăрăх хутăш комиссисем тума панă килĕшĕве кайала илмест, анчах ку чухне сăмах çĕнĕ чикĕ туса палăртасси çинчен пыман, ун чух халиччен тунă килĕшÿсемпе картăсем тăрăх чикĕне демаркаци тăвасси (чикĕре паллăсем лартса тухасси) çинчен йе редемаркаци тăвасси çинчен сăмах пынă. Йапони правительстви хăй Хунчунри килĕшĕве йышăнни çинчен пире уççăн каласа парсан, вара ун çинче кăтартнă чикĕне те хутăш комиссисен ĕçне кĕртме хатĕр пулатпăр, анчах ăна редемаркаци туму кăна кĕртĕпĕр. Хунчунри килĕшĕве урăх килешÿпе улăштарасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть. Вăрçă ĕçĕсене чарса лартассине илес пулсан вара, епĕр вăтам шутпа ийулĕн 29-мĕшчен пулнă лару-тăрăва çĕнерен йĕркелесе йаран, урăхла каласан, Йапони вăйĕсем Безымйаннайа высотана тата ун хыççăн Заозернайа высотана туртса илме хăтланса пăхиччен пулнă пек лару-тăру туса хурсан, Хунчунри договăр çинче кăтартса хунă йĕртен пирĕн йенчи совет территорийĕ çине Манчжури йенчен тапăнассисене пĕтерсе лартсан тата вăл территори çине персе тăма чарăнсан, тата çав территори çине татах пырса тухма пултаракан Йапони вăйĕсене илсе кайсан, вара совет йенчен те вăрçă ĕçĕсем пулма пăрахĕç, мĕншĕн тесен вĕсемшĕн сăлтав пулмасть, мĕншĕн тесен пире Манчжури çĕрĕ кирлĕ мар Заозернайа высотана çĕрле туртса илнĕ хыççăн йапонецсем çакна хăйсемех курса пĕлме пултарнă: вăл высота çинче наступлениллĕ ĕçсем валли ĕçсем туса хатĕрлемен пулнă, унта нимĕнле укреплениссем те туман пулнă. Ку ĕнтĕ совет йенĕн кăмăлĕсем мирлĕ пулнине нимрен те лайăхрах ĕнентерсе парать. Анчах совет халăхĕсем, хăйсем хамăрăн тесе шутлакан территорин хăть пĕр татăкĕ çинче çеç те пулин йут çĕршывсен çарĕсем пулнипе килĕшес çук, çав çарсенчен тасалас шутпа вĕсем нимĕнле тăкак тăвасси умĕнче те чарăнса тăрас çук. Çавăнпа та, совет территорийĕ çине тапăнасси йе ун çине персе тăрасси чарăмсăр, йе ун çинче Йапонин пĕр салтакĕ çеç те пулин пур чухне, совет правительстви хăйне мĕн кирлине тума ирĕклĕ пулма тивĕç. Вăрçă ĕçĕсем чарăнса ларччăр тесен мĕн тума кирлине г-н посол ăнланчех пуль тата ун çинчен хăй правительствине тĕплĕн те тĕп тĕрĕс пĕлтеретех пуль. Малашне Йапони правительстви, вырăнти влаçсене кирлĕ пек распоряженисем пама, Хунчунри килĕшÿпе картăсен копийĕсене йе вĕсен фотоÿкерчĕкĕсене илме пултарать.

Йапони послĕ çак калаçăва хăй правительствине пĕлтерме сăмах панă. (ТАСС)

Танк çине ларăпăр

ЕЛĔК. Йапони çарĕсем совет чикки çине тапăннине ылханса районри нумай колхозсенче митингсем пулса иртеççĕ

Тукаçри митингра Лаванăв тракторис çапла каларĕ:

— Тăшмансем пирĕн чикĕ урлă каçма пăхсан, епĕ трактăр çинчен танк çине ларса, хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама тухăп.

Митинг çакăн пек резолюци йышăнчĕ: Совет Союзĕ ĕлĕкхи патша Российĕ мар, вăл вăйлă. Ăна никам та çĕнтерес çук. Тăшман совет чикки урлă каçма хăпсăнсан, епĕр пурте çирĕп нарком—Ворошилăв йулташ приказĕпе хамăр тăван çĕршыва сыхлама пĕр çын пек пĕр харăс тăрăпăр. Колхоз ĕçĕнче татах та пысăк ÿсĕмсем туса, кăçалхи тырпула пĕр тăкаксăр пухса кĕртетпĕр.

Сывă пултăр коммуниссен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ!

Урнă йытăсене вилĕм!

Йапони военщинин пирĕн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи чикĕке ирсĕррĕн тапăнни çинчен пĕлсен, епĕр, Деткомиссин Шупашкарти хапрăкĕнчи рабочисем, работникăсем тата инженерла-техникла работниксем, Йапони самурайĕсене пит те хытă тарăхса ылханатпăр. Вăл çĕлен-калтасем, пирĕн Аслă Совет Союзне вăрçа кĕртсе йарасшăн пĕр хут кăна мар провокаци тунăскерсем, пирĕн мухтавлă пограничниксенчен тата пирĕн социалисăмлă тăван çĕршывăн мĕн пур халăхĕнчен татăклă отпор илнĕ, илеççĕ те.

Йапони империалисăмĕн, мĕн пур фашисла çĕлен-калтасен ирсĕр ĕçĕсене Аслă Совет халăхĕ хăйĕн речĕсене Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ тавра, йуратнă çулпуç Сталин йулташ тавра тата тачăрах пĕтĕçнипе ответлет. Епĕр Йапони военщини ирсĕр провокаци туннне чĕререн тарăхса ылханатпăр.

Епĕр хамăр правительствăран Йапони фашисăмĕн сăнчăртан вĕçерĕнне йыттисене чи хаяр ответ тыттарма ыйтатпăр.

Епĕр хамăрăн Совет правительствине, хамăрăн йуратнă хаклă коммунисла партине тата хамăрăн хаклă та аслă Сталин йулташа çакна шантаратпăр: Епĕр мĕн пур кĕтмен çĕртен тухакан „йăсăртлăха" кĕтсе илме хатĕр, епĕр хамăрăн телейлĕ тăван çĕршывшăн йулашки йун тумламĕ йуличчен çапăçма хатĕр.

Рабочисемпе хресченсен хăватлă, никам çĕнтерме пултарайман Хĕрлĕ Çарĕ сывă пултăр!

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ!

Пирĕн чикĕсене çирĕп çăрапа питĕрнĕ

Йустици Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсен резолюцийĕ

Йапони военщинин провокациллĕ ĕçĕсем çинчен пĕлсен, епĕр, Йустици Халăх Комиссариачĕ, Верховнăй Суд тата Прокуратурă коллективĕн сотрудникĕсем, пурте пĕр çын пек çапла калатпăр: Епĕр кирек хăш вăхăтра та хамăрăн тăван çĕршыва хÿтлеме алла хĕçпăшал тытма хатĕр.

Епĕр Йапони военщинине, Йапонипе Германи фашисăмне тата вĕсем йышши ытти тăшмансене нихăçан та Совет Союзĕнчен мăшкăлама ирĕк памастпăр.

Пирĕн халăх, пирĕн коммунисла парти, пирĕн правительствă, пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар—вăл пĕр чăмăр, йаланах мир ĕçĕшĕн тăрать, анчах тăшман пире вăрçа кĕртсе йарасшăн провокаци тăвать пулсан, вара хăйне айăплатăр. Урнă йытăсене каçару пулмасть. Епĕр Совет правительствин протесĕ çумне, пирĕн тăван çĕршыври ĕççыннисен нумай мĕлйунлă массисен протесĕ çумне пĕрлешсе çапла калатпăр: Епĕр мобилизациллĕ хатĕр, епĕр вăл хатĕрлĕхе тата ытларах тĕреклетме, хамăрăн ĕç тухăçлăхне ÿстерсе, хамăр çĕршывăн хăватне тĕреклетме пулатпăр. Епĕр хамăр коллективра оборонă ĕçне тата ытларах вăйлатма пулатпăр.

Пирĕн чикĕсене çирĕп çăрапа питĕрсе илнĕ, вĕсене пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар вичкĕн сыхлать. Йапони захватчикĕсене хирĕç çапăçакан пултарулă боецĕсене çуйăмлă салам!

Культмассăлă ĕç—уйхирте

МАРТЫНКАРИ (Трак р.) „Хĕрлĕ хĕрелтухăç“ колхоз кăçал тырпулĕсене уйран пĕр такаксăр пуçтарса кĕрес тĕлĕшпе тăрашса ĕçлет. Ыраша кĕске вăхăтрах вырса пĕтерне. Колхозра 4 бригадă, 5 жнейкă. Çав жнейкăсемпе тулли усă кураççĕ. Г. Александрăв тата А. Багров машиноведсем нормăна 150 процент, кĕлте çыхаканcем: А. Григорйĕв, А. Иванова, Н. Александрăв, К. Антонăвă, И. Куçмин йулташсем нормăна 250 процент тултарса пыраççĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса çуртри вырaççĕ. Культмассăлă ĕçе уйра лайăх йĕркеленĕ. Уйра культповозкă пур. Кунта радио, патефон. Колхозниксем каннă вăхăтра вĕсене хаçат-журналсем вуласа параççĕ, Испанири тата Китайри ĕçсем çинчен калаçусем туса иртереççĕ. Çтена хаçачĕсем кашни бригадăрах йĕркелĕн тухса тăраççĕ.

П. Владимирăв.

Ĕçре çирĕп дисциплинă кирлĕ

Уйри тырпулсене пуçтарса кĕме тухиччен пĕр-икĕ уйăх малтан Ĕçмĕлти „Ударник“ (Сĕнтĕрвăрри р.) колхоз правлени членĕсемпе бригадирсем тырпула пуçтарса кĕртме хатĕрленесе çитни çинчен пĕлтерчĕç. Анчах, ыраш вырма тухсан ĕçе йăпăх хатĕрленсе тухни курăнчĕ. Икĕ машинăран пĕри те ĕçлемен. Хăшпĕр бригадирсем хăйсен участкисем ăçта выртнине те манса кайнă пулнă. Ыраш вырма тухнă кунне пĕрремĕш бригадăри колхозниксен икĕ сехет хушши хăйсен участкине шыраса çÿремеле пулнă. Тепĕр бригади йединоличниксен çĕрĕ çине кĕрсе кайса, çур гектара йахăн вĕсен ырашне вырса илнĕ. Бригадирсем куне-кунĕпе хăйсен бригадисенче пулманнипе кам мĕнле ĕçленине хисепе илсе пыман.

Бригадăсенче ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн кĕрешни пачах курăнмасть. Ĕçмĕл пасарĕ пулнă кун колхозниксем пасара çÿресе вăхăта ирттереççĕ. Хăшпĕрисем çĕмйипех ĕçе тухмаççĕ, ĕç вăхă ĕнчех Çĕрвÿ хулине морс ĕçме кайаççĕ.

Ĕçре дисциплинă начаррине пула уй ĕçĕ йулса пырать, тăккаланчăкпа кĕрешмеççĕ.

В. Сидйаков.

„Хĕрлĕ Çар“ колхоз кĕракине хатĕр мар

ÇĔРПĂ. (Хамăр. корр.). Анат Чăрăшри „Хĕрлĕ Çар“ колхоз тырпулçене пухса кĕртес ĕçре йулса пырать. Вырнă тырпула капана хывас ĕçе халь те тытăнман, мĕншĕн тесен урапасем халь те ванчăк лараççĕ, вĕрен-пайавсем те çитмеççĕ. Кĕлте турттараканcене те уйăрман. Колхозăн пĕр жнейкă пур, анчах унпа кăçал пĕр кĕлте те вырман. Колхоз çуртри вырма ийулĕн 31-мĕшĕнче кăна тухрĕ.

Пахалăх комиссии ĕç вăхăчĕ пуçланнăранпа та уйа тухса курман.

Культурăлă-массăлă ĕç пачах сÿнсе ларнă. Хаçат-журналсем çителĕклĕ çырăнман. Агитатăтăрсемпе политвула çисем ĕçлемеççĕ Çтена хаçачĕ тухмасть. Столовăй ĕçлемест, ача йаçли уçман.

Колхоз кĕрхи акана тухма та хатĕрленме тытăнман. Çейалкă йусавсăр ларать. Акакансем, сухалакансем камсем пуласси те паллă мар. Çав вăхăтрах правлени председателĕ Владимирăв ĕçсе ÿсĕрелсе çÿрет. Çав майпа хăшпĕр лайăх ĕçлекен колхозниксене тĕрлĕ кирлĕ мар сăмахсем каласа кÿрентерсе ĕçрен сивĕтет.

М. Йакăвлĕв.

16 гектар çинче сат ĕрчетнĕ

Кив Тукайри „Хурçă“ колхоз (Сĕнтĕрвăрри р.) членĕсем колхоза организацилле хуçалăх йенчен тĕреклетсе пынă никĕс çинче хăйсен культурлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Халĕ колхозра йалхуçалăх производствин ытти пайĕсем те анлăн саралса пыма тытăнчĕç.

Колхоз 16 гектар çинче сат ĕрчетет, унта 12 пин тĕп улмуççи ÿсет. Тĕрлĕрен çырла йывăççисем те ÿсеççĕ.

Кăçал колхоз пирвайхи çул сатран 5 пин тенкĕ таса тупăш илме шутлать. Государствăна 16 центнĕр таран çырла сутнă, колхозниксене 6 центнĕр валеççе панă.

Сат ĕçĕнче йалан ĕçлесе тăмашкăн 18 колхозникрен уйрăм звено тунă. Звенори колхозниксене Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ патефон парса премиленĕ.

Колхозăн хăйĕн питомник пур, унта темиçе пин улмуççи ÿсет. Кăçал 8 пин тĕп улмуççи сыпнă.

В. С.

Клешчсем саралнă

Аслă Каçалри „Большевик“ колхозра (Патăрйел р.) халиччененех тырпула тирпейлĕ тыткалама вĕренеймен. Колхоз 23 ампартан пĕрне те дезинфекцилемен. 16 ампарта кивĕ тырă выртать. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх валеçмели тырра халь те валеççе пĕтермен.

Кунта витнĕ итемсене те кивĕ уламсенчен тасатса дезинфекци туман, молотилкăсене те тасатман. Çавăнпа та колхозăн кĕрхи тырăсем çинче клешчсем нумай саралнă. Клешч йернĕ пирки Канашри хатĕрлев пункчĕ çав тырра йышăнмасăр икĕ хутчен те кайала тавăрса панă.

„Хĕрлĕ майак“ колхозра та тырпулсене клешчсем йересрен сыхламаççĕ. Тырă хумали 14 ампартан тăваттăшне çеç дезинфекциленĕ. Пĕр итем çинчех аван çапнă пирки, суртлă ыраша суртсăррипе хутăштарса йанă.

„Октябĕр çулĕпе“ колхоз тырă хумали ампарсене шурă тăмпа çеç шуртнă. Çавăнпа клешчсем саралса кайнă.

Н. Квасăв.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Парти кандидачĕсем

А. М. Çмирнов йулташ парти кандидачĕ—Тутаркас районĕнчи Жданăв йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Ку колхоз чылай çитĕнÿсем турĕ. Иртнĕ çулта вăйлă тырпул туса илчĕ. Çуракине лайăх ирттерчĕ. Анчах... Çмирнов ĕçе хавшатрĕ. Енĕр çавах малта пыратпăр тесе, Çмирнов йулташ нумай çитменлĕхсене курмасăр иртсе кайать. Халь колхозра лаша тавраш ĕсене, урапасене, ĕнерчĕксене т. ыт. кашни колхозник килне салатнă. Икĕ жнейкă тырă вырнă чухне ахалех ларчĕç. Политикăлă-массăлă ĕçе колхозниксем хушшине сарса йарас тĕлĕшпе Çмирнов нимĕн те ĕçлемест. Мĕн пур ĕçе политикăна сахал вĕренни, иртĕнни, мухтанма вĕренни пăсса тăрать.

Ман Хурăçкари кандидатсен группинче Андушкин Дмитрий Михайлавич тăрать. Андушкин йулташ „Пахарь“ колхозăн ревизи комиссийĕ членĕнче ĕçлет. Вăл кашни ĕçе политикăла çыхăнтарса пырать, пур ыйтупа та интересленет. Уйрăмăнах вăл Сталин йулташ стахановецсен Пĕтĕм Союзри 1-мĕш канашлăвĕнче Петров парторга каланине аставать. „Есĕр партире тăракан çын, сирĕн пуринпе те интересленес пулать“ тенине пурнăçлать.

Тырă вырнă чухне кам лайăхрах ĕçлет, кам тăккаласарах вырать,—çавсене пурне те пĕлме тăрăшать Андушкин йулташ. Тата вăл бригадирсем колхозниксене ĕçкунĕсем мĕнле лартса панине тĕрĕслет. Ĕçкунĕсене лартса памасан бригадирсене çав срукчен туса пĕтерĕр тесе хушать, кайран тĕрĕслет. Çтена хаçачĕ кăларас ĕçе, культурăлă-массăлă ĕçе организацилессишĕн тăрăшать.

Енĕр икĕ йулташ çинчен каласа патăмăр. Андушкин йулташ пример пулса тăрать. Çмирнов йулташăн манăçлăха пăрахса тивĕçлипе ĕçлеме тытăнмала.

Вир Мĕтри.

Кандидатсене ĕçре пулăшмала

Йĕпреç районĕнчи парторганизацинче 45 кандидат. Парти райкомĕ çак кандидатсене политикла воспитани парас пирки çителĕксĕр ĕçлет. Уйрăмăнах вăрманпромхозри пуçламĕш парторганизацинче кандидатсемпе ĕçлесси начар тăрать. Кунта парти кандидачĕсем 4 çын. Вĕсене партвĕренĕве йавăçтарман. Вĕсемпе ĕçлемен пиркийех кандидат Рыжовă (килхуçи хĕрарăмĕ) парти ĕçĕнчен уйăрăлса кайнă. Парторг Николайĕв кандидатсене перре те пухса калаçман.

Районри финанс пайĕнчи парторганизацинче 3 кандидат шутланса тăрать. Ку кандидатсемпе те уйрăмăн ĕçлени çук. Çавăн пирки ĕнтĕ Андрÿшĕвкари налог агентĕнче Иванов йулташ парти ĕçĕнчен уйăрăлса кайнă, хăйĕн ĕçне путлĕ тумасть.

Парти райкомĕ кăçал ийулĕн 13-мĕшĕнче кандидатсене пухса, партин уставĕпе программине вĕрентнĕ, вĕсен мĕн çитменлĕх пуррине ыйтса пĕлнĕ. Çакăн хыççăн кандидатсемпе ĕçлесси пĕр так хусканнă, анчах кайран лăпланнă.

Районра лайăх ĕçлекен кандидатсем сахал мар, вĕсен опычĕсене сарни çук. „Çиçĕм“ колхоз çумĕнчи кандидатсен группи аван ĕçлет. Кунта Иван Орлов, Григорий Симбирский кандидатсем колхозниксем хушшинче вирлĕн ĕçлеççĕ. Вĕсем иккĕшĕ те агитатăр. Кандидат группи руководителĕ А. Симбирский вĕсене ĕçре пулăшать.

А. Михайлăв.

Кандидатсемпе ĕçлемен райком

Ишлей районĕнчи парторганизацире 30 кандидат. Вĕсенчен чылайĕшĕ 1930—1932 çултанпа парти кандидатĕнче тăраççĕ. Ишек йалĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозри В. А. Смелов йулташ 1930 çултанпа, Шалти ĕçсен халăх комиссариачĕн районри уйрăмĕнче ĕçлекен Н. Любимăв йулташ 1931 çултанпа, Алексейĕв йулташ 1932 çултанпа, Курбатăв йулташ 1932 çултанпа парти кандидатĕнче тăраççĕ. Райçтавком çумĕнчи пуçламĕш парторганизацире 9 кандидат, вĕсенчен виççĕмĕш 1932—33 çултанпа парти членне куçаймасçĕ.

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлавă вăхăтра парти кандидачĕсенчен чылайĕшĕ агитатăрсем, доверĕннăйсем пулса ĕçлесе, хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç. Анчах пуçламĕш парторганизацисем вĕсене парти членне куçарассишĕн тăрăшмаççĕ.

Пĕчĕн коммунистсемпе пачах çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Ака, Акрамăвари туллимар вăтам шкул преподавателĕ Фадей Дивиткин, пĕччен коммунис, иртнĕ суйлав кампанинче активлă агитатăр пулса ĕçленĕ. Вăл 1931 çултанпа парти кандидатĕнче тăрать. Парти райкомĕ Дивиткин йулташа парти членне куçарасси çинчен маьса кайнă пулмала.

Парти райкомĕ Дивиткин йулташпа çеç мар, ытти кандидатсемпе те ĕçлемест. 1938 çулта ПСК(б)П райкомĕ парти кандидачĕсемпе пĕр канашлу та ирттермен. Кандидатсене большевикла воспитани парасси çинчен райком ларăвĕсенче перре те ыйту лартман. „Кандидатсемпе ĕçлеме епĕр инструктăрсене хушнă“, тет райком çекретарĕ Сазонăв йулташ. Анчах ку ĕçе инструктăрсем те тумаççĕ.

Капитальнăй строительствă планне тултарасси хăрушлăх умĕнче

Коммунистсен партийĕ, совет правительстви ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, культурлăхне çĕклессишĕн йалан тăрăшаççĕ. Кăçал пирĕн республикăра коммуналлă çуртсĕр тата культурăс строительствине промбанк урлă 10 500 пин тенкĕ хывмала. Вăл укçа-тенкĕпе Улатăрти, Канашри мунчасене, Улатăрти водопровода туса пĕтерсе ĕçе кĕртмеле, çĕнĕрен шкулсем, ача йаçлисем т. ыт. тумала.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти февралĕн 26-мĕшĕнче йышăннă постановленийе капитальнăй ĕçсен планне вăхăтра тата лайăх пахалăхпа пурнăçа кĕртсе пыма çулсем кăтартса парса хуçалăхла строительствă организацисем çине пысăк ответлăх хучĕ. Анчах та иртнĕ 7 уйăх хушшинчи итогсем çак ответлă участкăра ĕçсем йапăх тăни, нумай пысăк участкăсем хăрушлăх умне йулни çине кăтартса параççĕ. Малтанхи çурçул хушшинче кăçал строительствă ĕçне хывма палăртнă укçа-тенкĕ хисепĕнчен 25,7 процентĕпе çеç усă курнă.

Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕн малтанхи çурçул хушшинче строительствăна 5462,9 пин тенкĕ укçа хывса чылай çĕрте ача йаçлисем, сачĕсем т. ыт. туса пĕтермеле пулнă пулсан, 1517 пин тенкĕ çеç хывнă. Ку укçа-тенкĕне те пуринчен ытларах иртнĕ çулта туса çитермен çуртсене тунă çĕре хывнă. Кăçал тума палăртнă стройкăсенче нумайĕшĕнче ку таранччен те ĕç пуçланман. Шупашкарта ача çуратмали çурта тума тытăнман, Улатăрти тата Шупашкарти ача сачĕсен çурчĕсене тума халĕ те пройектсемпе сметă сене хатĕрлесе çитермен. Кунаш кал пулнине халăх комиссариачĕн руководителĕсем çавăрнăçусăр, ответлăха туймасăр ĕçленипе хаклăнисĕр пуçне нимĕнпе те сăлтавлама çук.

Çутĕç халăх комиссариачĕ йенĕпе тавакан стройкăсенче ĕç йапăх пырать. Строительствă ĕçне кăçал хывма палăртнă укçа-тенкĕрен 35,3 процентĕпе çеç усă курнă.

Малтанхи çурçул хушшинче капитальнăй строительствă планне пурнăçа кĕртмен пирки III-мĕш квартăлта пысăкрах пулать. Виççĕмĕш квартăлта капитальнăй ĕçсен планĕ 5433,2 пин тенкĕ шутланать. Ку плана пĕтĕмпех тултармала тăвас пулать. Апла тума хуçалăхпа строительствă организацисем пĕтĕм ĕçе çирĕп йĕрке тăрăх организацилесе нихçанхинчен тимлĕн ĕçлеме тытăнни кирлĕ. Виççĕмĕш квартăла кĕнĕренпе пĕр уйăх иртрĕ. Çапах строительствă ĕçĕнче палăрмалăх улшăнусем туни курăнмасть-ха. Строительствă ĕçĕ халĕ те малтанхи пекех начар хăвартлăхсемпе пырать.

Ийуль уйăхĕнче строительствăна пĕтĕмпе 643,4 пин тенкĕ çеç хывнă. Ку квартал строительствăна хывма палăртнă укçа хисепĕнчен 11,8 процентĕ çеç пулать. Сывлăха сыхлав йенĕпе тумали стройкăсене 664,9 пин тенкĕ хывмала пулнă, 103,6 пин тенкĕ çеç хывнă.

Шупашкарта Советсен çуртне тăвасси те хуллен пырать. Виççĕмĕш квартăлта кунта мĕлйун тенкĕлĕх ытла ĕçсем тумала, ийуль уйăхĕнче сметăпа палăртнă хакпа 66,8 пин тенкĕлĕх çеç тунă. Çавнашкалах 24, 12 хватарлĕ çуртсене, Карл Маркс урамне асфальт сарасси те вăрăма чăсăлчĕ. Ытти чылай çуртсем тăвасси те йерипен пырать.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессинче Халăх Комиссариачĕсен, çавнашкалах Халăх Комиссарĕсен Совечĕн руководствине хыттăн критиклерĕç. Сывлăха сыхлав халăх комиссарĕ пулнă Чернов строительствă ĕçне куллен оперативлă йертсе пырас вырăнне решенисем, приказсем çырнипе лăпланса тăнă. Строительствă ĕçне уйрăм работниксем çине хунă та ĕç мĕнле пынине тĕрĕслесе пыман.

Строительствă ĕçне анаçлăн пурнăça кĕртесси августпа çĕнтăбĕр уйăхĕнчи ĕçсем татса параççĕ. Халăх комиссариачĕсен, тĕп хуçалăх организацисен тата строительствă организацисен пĕр-пĕрин çине шанса тăмасăр строительствă ĕçне хăвăрттăн çĕклесе пымала тăвас пулать. Правительствă укçа-тенкĕ панă. Строительствă материалсем хатĕрлеме, ĕç вăйĕ çителĕклĕ пухма кирлĕ условисем çителĕклĕ. Ĕçе малтан шутласа тунă çирĕп график тăрăх организацилесе стройкăсенче социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма вăйлăн çĕклентерсе пымала. Паллах, апла тума большевикла тимлĕхпе ĕçлени кирлĕ.

Райĕçтăвкомсемпе хула совечĕсен строительствă ĕçне анăçлăн илсе пымала тума куллен пулăшса пымала. Капитальнăй строительствă ыйтăвĕсене райĕçтăвком, хула совечĕсен, йалсоветсен пленумĕсенче анлăн сÿтсе-йавса, йулса пырассине пĕтерме татăклă мерăсем йышăнмала. Строительствăсене ĕç вăйĕ çителĕклĕ организацилемеле. Строительствă ĕçне вăхăтра пурнăça кĕртесси укçа тенкĕ пухас плана тултарса пыма хушать. Совет тата финанс органĕсен укçа-тенкĕ пухас плана йалан тултарса пымала.

Капитальнăй строительствă ĕçне çак кунсенчех татăклăн çĕклемеле. 1938 çулти плана пĕтĕмпех тултармала тăвас пулать.

В. Таврин.

Колхозри строительствă

Тойкилтĕ йалсоветĕнчи (Тутаркас районĕ) „Динамо“ колхоз 300 çын вырнаçмалăх клуб туса çитерчĕ. „Çĕнĕ пурнăç“ колхоз 30 лаша вырнаçмалăх лаша вити туса çитерчĕ.

К. Никитин.

Тухăçлă ĕçлеççĕ

Уплерти „Труд“ аластă ертел членĕсем (Сĕнтĕрвăрри р.) производствă планне тултарассишĕн çулталăк пуçламĕшĕнчех тимлĕн ĕçлеме пуçларĕç. Кашни аластаç социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса хăйĕн нормине йалан тултарса пырассишĕн кĕрешме тытăнчĕç.

Ăмăртура стахановецсем ÿссе çитĕнчĕç. Васильйĕв йулташ çичĕ уйăх хушшинче хăй пĕччен 33 пин кирпĕч туса, нормăна 330 процент тултарнă. Халĕ вăл хăйĕн çулталăкри планне 500 процент тултарассишĕн кĕрешет. Кунашкал тухăçлă ĕçлекенсем ертелте сахал мар. Владимирăв, Давыдăв йулташсем хăйсен ĕçне йалан пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ.

Стахановецсем тăрăшса ĕçленипе ертелĕн производствăлă планĕ анаçлăн пурнăça кĕрсе пырать. Пĕтĕмпе 500 пин кирпĕч туса кăлармала пулсан, çичĕ уйăх хушшинче çĕрĕ кирпĕчсем 350 пин штук туса кăларнă. Вăл шутран 180 пин кирпĕче хĕртнĕ.

Ертел хуçалăх йенчен те тĕреклесех пырать. Кăçал автомашинă туйанчĕ. Ертел членĕсен хушшинче культурăлă-массăлă ĕçе туса пыма кирлĕ хатĕрсем туйаннă.

П. Йа.

Массăлă-ăнлантару ĕçне вăйлатни кирлĕ

(Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома сарасси)

Августăн 4-мĕшне илсен Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайома республикĕпе 13 603 000 тенкĕлĕх çыраннă. Правительствă зайом кăларасси çинчен решени йышăннăранпа пĕр уйăх ытларах ĕçлесе, çĕнĕ зайома, ССР Союзĕн Оборонине тĕреклетмели зайома сарнипе танлаштарсан 109 процент сарнă.

Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем правительствă зайом кăларнине çав тери пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕç. Шупашкар, Улатăр, Çĕмĕрле хулисенчи ĕççыннисем зайом туксан 5—6 кун хушшинчех иртнĕ çулхинчен ытларах çырăнчĕç. Çак хуласенчи рабочисемпе служащисем йенĕпе илсен зайома оборонă зайомне çыраннине танлаштарсан 114 процент чухлĕ çыраннă. Республикĕпе илсен рабочисемпе служащисем уйăхри ĕç укçи фондĕнчен 74,6 процентлăх çыраннă. Ку ĕнтĕ виçĕ ернери ĕç укçи чухлĕ çыраннине пĕлтерет. Чылай коллективсенче уйăхри ĕç укçи чухлех çыраннă. Вăтамăн илсен Шупашкар хулинче ĕç укçи чухлĕ çыраннă коллективсем 25 процент ытла шутланаççĕ. Ремонт тăвакан механически савăтри стахановецсем—Горьков, Сапожникăв, Добрынин, Йерошин тата ытти йулташсем те хăйсем уйăхра илекен ĕç укçи чухлĕ чи малтан çыраннă. Вĕсем хыççăн савăтри пур рабочисемпе служащисем те зайома пысăк хастарлăхпа çыраннă. Çапла вара, пĕтĕмпе илсен кунта уйăхри ĕç укçи фондĕнчен иртерсе çыраннă.

„Ик-виç ернери ĕç укçине государствăна кивçен парар“,—тенĕ лозунг рабочисемпе служащисем йенĕпе пурнăçа кĕнĕ. Апла пулин те пур рабочисемпе служащисене те зайом çырăнтарса çитермен-ха. Августăн 1-мĕшне илсен рабочисемпе служащисенчен 93 процент анчах зайом илме çыраннă. Зайома çыранаймасăр йулнисен шутне отпуска кайнисем, курортсемпе санаторисене сывалма кайнисем, командировкăсенчисем тата çĕнĕрен ĕçе кĕнĕ рабочисемпе служащисем кĕреççĕ. Паллах ĕнтĕ, зайом çыранаймасăр йулнисем те зайом илме çыранасшăн. Вĕсем хăйсен перекетленнĕ укçисене государствăна кивçен парса, социалисăм строительстви ĕçне хастарлăн хутшăнма тăрăшаççĕ. Финанс органĕсен, предприйатисемпе учрежденисенчи комсодсен, профсоюз организацисен, учрежденисенчи руководителĕсемпе бухгалтĕрсен пур ĕççыннисене те Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх (пĕрремĕш çулхи кăларăм) Зайом çинчен тĕплĕн ăнлантарса памала. Кашни ĕççынни зайом çыраннипе социалисăм строительствине активлăн хутшăнма пултарать.

Ĕçрен тухса кайакансем пулсан комсодсемпе бухгалтĕрсен вĕсенчен зайом укçине тытса йулмалла, çавăн чухнех тата зайомшăн укçа тÿлесе чухлĕ зайом облигацисене илла памала. Çавăн пекех çĕнĕрен ĕçе кĕрекен кашни çынна зайом çырăнтармала, пĕр рабочипе служащи те, пĕр вĕренекен те зайом çыранмасăр ан йултăр. Комсодсен бухгалтĕрсем рабочисемпе служащисенчен зайомшăн укçа тĕрĕс тытса йулнине тата зайом укçине вăхăтра перекет кассине куçарнине лайăх пĕлсе тăмала. Халĕ çак ĕçе те тивĕçлипе туса пыни çук-ха. Августăн 1-мĕшне илсен рабочисемпе служащисем йенĕпе зайом çыраннă хисепрен 5 процентран кайа мар укçа пухăнмала пулнă. Халĕ 3 процент йе 200 пин тенкĕ йахăн çеç пухăннă.

Йалта зайом сарас ĕçре Улатăр, Патăрйел, Вăрнар, Кувакинă, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Тутаркас, Шăнкăртам, Йĕлчĕк районĕсем малта пыраççĕ. Ку районсенче çĕнĕ зайома иртнĕ çулхи зайомран иртерсе çыраннă, кăçалхи зайом тăрăх илнĕ обйазательствăна лайăх пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Августăн 1-мĕшне илсен Шăнкăртам районĕнче колхозниксемпе ĕççынни йединоличниксенчен 58 пин тенкĕ, Тутаркас районĕнче 50 пин тенкĕ, Йĕлчĕк районĕнче 18 пин тенкĕ укçа пухăннă.

Зайомшăн укçа пухас ĕçе хĕрÿлĕн тытăнни кирлĕ. Анчах зайом çыранассипе малта пыракан хăшпĕр районсемех çак ĕçре йулса пыраççĕ. Ишлей тата Тăвай районĕсенче зайом çыранасси çителĕклĕ пымасть, çавăн пекех вăл районсенче укçа пухас ĕçе те организацилемен. Ийуль уйăхĕнче колхозниксемпе йединоличниксем çыраннă шутран 10 процентран кайа мар зайом укçи пухăнмалаччĕ. Çак укçа Елчĕк районĕнче 2,3 процент, Куславкка—1,3 процент, Çĕмĕрле—1,4 процент, Канаш районĕнче 4 процент кăна пухăннă. Зайом укçи пухас йенĕпе ку районсем республикине кайала туртса пыраççĕ. Республикĕпе илсен колхозниксемпе йединоличниксенчен ийуль уйăхĕнче 7 процент анчах укçа пухăнна, уйăхри вăтам хисепе илсен 100 пин тенкĕ йахăн пуханăймасăр йулчĕ.

„Кашни гражданин—Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайом подписчикĕ“ лозунга пурнăçа кĕртессишĕн хĕрÿлĕн ĕçлени кирлĕ. Халĕ малта пыракан районсенче те пур ĕççыннисене те (Шăнкăртам—82 процент, Тутаркас—61 процент, Йĕлчĕк—53 процент тата ытти те) зайома çырăнтарайман-ха.

Ĕççыннисем зайома хавасланса çыранаççĕ. Финанс органĕсен, районсенчи руководителĕсен тата обществăлă организацисен зайом тавра массăлă-ăнлантарулă ĕçе вăйлатмала. Массăлă-ăнлантарулă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартнă çĕрте ĕç пысăк анаçлăхпа пулса пырать. Шăнкăртам районĕ кăçал ку йенĕпе уйрăмăнах лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕ. Кзыл Чишме йалсоветĕнче пĕр ĕççынни те зайома çыранмасăр йулман. Пурĕ 9.100 тенкĕлĕх çыранса, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çессине усăлнă тĕле укçа тÿлесе татнă. Çакнă ĕç çине тимлĕн пăхнипе, зайом уполномоченнăйĕсем Шафигуллин, Вилдановă, Калимуллин, Фейзуллин тата йалсовет председателĕ Минайĕв йулташсем ĕçе пĕлсе организациленипе тунă. Верховнăй Советсен суйлав кампани вăхăтĕнче ÿснĕ актив зайом сарассипе пĕрлех ытти ĕçсенче те лайăх ĕçлесе пырать. Çак йалсоветра зайом сарас ĕç пынă вăхăтра государствăна аш-какай тăратмали плана 100 процент, сĕт-çу тăратмали плана 80 процент, çăм тăратмали плана 100 процент тултарнă. Колхоз ийулĕн 19 мĕшĕнче ыраш вырса пĕтернĕ. Ыраш тата пăрçалă культурăсем йенĕпе государствăна тырă тăратмали плана тултарнă. Шкул валли вутă хатĕрлесе, 140 кубла метр турттарса килнĕ. Налог тата ытти тÿлевсем йенĕпе пухмали йулнă укçасене пĕтĕмпех тÿлесе татнă.

Халăх массине ăнлантарса памала тата актива ĕçе йавăçтарма пĕлмен вырăнсенче ĕç йаланах начар пырать. Хăшпĕр йалсоветсенче ĕçлекенсем çакна ăнланмаççĕ. Канаш районĕнчи Катек йалсовечĕн председателĕ Лошкинпа йалсовет секретарĕ ийулĕн 29-мĕшне çитиччен хăйсем те зайом çыранман. Зайом уполномоченнăйĕсене удостоверенисемпе укçа пухмали квитанцисем илла паман. Зайом сарни çинчен уполномоченнăйсем калавă тăрăх, ĕç мĕнле пынине тĕрĕслемесĕрех района тĕрĕс мар сведенисем парса тăнă. Массăлă-ăнлантарулă ĕç çук, йалсовет активĕ авторитетлă мар.

Зайом çыранасси йалсенче йулса пынине пĕтерес, укçа пухас ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени кирлĕ. Районсенчи финанс пайĕсем, перекет кассисем, обществăлă организацисем хăйсен ĕçĕсене тĕпренех çĕнетме тивĕçлĕ.

ССРС, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампани вăхăтĕнче вăйлă актив ÿсрĕ, вăл актив ĕççыннисем умĕнче пысăк авторитетпа усă курать. Çак актива зайом сарас ĕçе йавăçтармала. Массăлă-ăнлантарулă ĕçе вăйлатмала. Пĕр ĕççынни те зайом илмесĕр ан йултăр. Çакăншăн вăйлăн кĕрешмеле.

Государствă кредичĕпе Перекет кассисен Чăваш республикĕнчи Управлени начальникĕн заместителĕ Ф. Миронăв.

Колхоз бригади 48 пин кирпĕч тунă

ЙЕТĔРНЕ. Кăташри „Пионер“ колхозра иртнĕ çулта кирпĕч тăвакан бригадă организациленĕччĕ. Ку бригадă кăçал та кирпĕч тунă çĕрте ĕçлет. План тăрăх бригада 70 пин кирпĕч тумала пулсан, ку таранччен 48 пин кирпĕч тунă. Кирпĕч тăвакан производствăра Афанасий Семашкин йулташ пысăк тухăçлăхпа ĕçлет. Вăл 9500 кирпĕч тунă. Ку нормăна 140 процент тултарни пулать. Çавăн пекех В. Гаврилăв, И. Йакăвлĕв йулташсем те нормăна куллен 110 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ.

П. Григорйĕв.

Литературă страници

Писатĕлсен сойузĕнче

Августăн 1—3-мĕш кунĕсенче чăваш совет писателĕсен отчотлă суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Правлени ĕçĕсем çинчен М. Данилăв—Чалдун доклад туса пачĕ.

Хăйĕн нумай сăмахлă докладĕнче вăл правлени мĕнле ĕçлени çинчен нимех те йĕркелĕ каласа параймарĕ.

Прение тухса калакансем пурте пекех правлени питĕ начар ĕçлени çинчен, уйрăмăнах М. Данилăв—Чалдунăн киревсĕр ĕçĕсем çинчен вăйлăн астутарчĕç. Çамрăк писателсене пулăшу парас тĕлĕшпе вĕсене çул кăтартса, йĕртсе пырасси пирки, литкружоксене Шупашкар хулинче те, районсенче те йĕртсе пырас тĕлĕшпе нимрен ытла тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессипе кĕрешес тĕлĕшпе йапăх ĕçленĕ.

Иртнĕ çулăн ийулĕ уйăхĕнче суйласа хăварнă правленинче ĕçлекенсем (Н. Мранька. М. Данилăв—Чалдун) халăх тăшманĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсемпе кĕрешмен. Вăл çеç те мар, хăйсене ответ тыттарассинчен хăтăлас тесе, вĕсем ытти нимĕн айăпсăр писателсене халăх тăшманĕ тесе, елеклесе пĕтернĕ. вĕсене чылайĕшне вырăнтан кăларттарнă.

Çав политикăла пысăк йăнăша Парти Тĕпкомĕн йанвар уйăхĕнче пулса иртнĕ пленумĕнче йышăннă постановлени хыççăн та тӳрлетмен.

Н. Мраньккана правлени председателĕнчен кăларнă хыççăн, ун вырăнĕнче М. Данилăв—Чалдун ĕçленĕ, анчах вăл кăтартнă йăнăшсене тӳрлетес тĕлĕшпе нимех те туман. Обком бюровĕн апрелĕн 9-мĕшĕнче писателсен сойузĕн ĕçĕсем çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртме тăрăшман, чарса тăнă, вăл постановленийе писателсенчен пытарса усранă.

Тухса калакансенчен чылайĕшĕ М. Данилăв — Чалдун хăйĕн пĕлĕвне ӳстерме тăрăшманни çинчен, вăл чăвашла та, вырăсла та начар пĕлни çинчен, унăн алçырăвĕсене редакторсем çеç йĕркене кӳртсе кăларса пыни çинчен чăрăнса тăчĕç. Писателе вырăсла пĕлменни килĕшмест. писатĕл нумай вĕреннĕ çын, нумай пĕлекен çын пулмалине тепĕр хут астутарчĕç.

Çĕнĕ правленийе вăрттăн сасăласа И. С. Тукташ, Уйăп Мишши, С. Ĕлкер, Н. Васанкка тата Ив. Ивник йулташсене суйларĕç.

Ревизи комиссине: Арк. Ĕçхĕле, П. Н. Осипăва, Й. Ухсайа.

Малашне Д. Данилăв, М. Данилăв—Чалдун, А. Петтоки тата А. Талвир писателсен ретĕнче тăрассипе тăрас марри çинчен çĕнĕ правленийе тĕплĕн сӳтсе йавмала, писателсен çитес пухăвĕнче уйрăм ыйту лартмала тесе йышăнчĕç.

Çав кунах çĕнĕ превленин малтанхи ларăвĕ пулса иртрĕ. Правлени председателне Уйăп Мишшине, унăн заместителне Н. Васанккана суйларĕç. Çак ларурах поетсен, прозаиксен, драматургсен, критиксен тата халăх творчĕствин (фолклорăн) секцийĕсене организацилесе вĕсен ĕçĕсене йĕркелесе йарасси çинчен йышăнса хăварчĕç.

Мĕншĕн пирĕн çинчен çырмаççĕ

(Хĕрсен çырăвĕ)

Аслă Октăбĕр революцийĕ хыççăн Чăваш литератури мĕнле пысăк утăмсем туни пириншĕн те паллă, епĕр увăн ӳсĕмне кунсеренех сăнаса пыратпăр. Епĕр илемлĕ литературăпа çав тери интереслenетпĕр. „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пичетленсе пыракан калавсене, сăвăсене çамрăксем пĕрле пухăнса вулатпăр, сӳтсе-йаватпăр, хак паратпăр. Кунсăр пуçне „Капкăн" тата „Сунтал" журналсене йуратса вулатпăр.

Анчах чăваш литературинче епĕр хамăран образсене питĕ те сайра тĕлпулатпăр.

Илер-ха „Нарспи" поемăна. „Нарспи"—вилĕмсĕр произведени. Талантлă поет К. В. Иванов ку поемăра чăваш хĕрĕн иртнĕ хĕн-хурлă кунçулне пысăк маçтăрлăхпа кăтартнă. Поемăна вуланă чухне чăваш хĕрарăмĕн пурнăçĕ çеç мар, пĕтĕм чăваш халăхĕн ылханлă патша саманинчи асапла пурнăçĕ уçăмлăн курăнать. Халĕ ĕнтĕ вăл вăхăт иртрĕ. Сценă çине çĕнĕ Нарспиcем, çĕнĕ Сетнерсем тухрĕç. Тракторçинче вĕсем, комбайн çинче—пĕтĕм уйа çĕмĕртереççĕ, шкулсенче—аслăлăха вĕренеççĕ йе сывлăшра вĕçеççĕ—епĕр весем! Епĕр—çĕнĕ Нарспиcем.

Ыйтас килет чăваш писателсенчен: Пирĕн образа литературăра мĕншĕн памаççĕ? Çĕнĕ Нарспиcем çинчен мĕншĕн пур халăх хавхаланса вуламали пысăк произведенисем çырмаççĕ? Епĕр ыйтатпăр. Пирĕн ыйту çитес вăхăтрах ĕçпе пурнăçланĕ тетпĕр. Писателсем, сирте сăмах!

Шинер Тăрăн йалĕнчи (Ишлей р.) хĕрсем: М. Галкина, М. Ухтерина, С. Самсонăва.

Ал. Ралек

Тăван çĕршыв

Çĕршывăм пит аслă. Çĕршывăм
пуйан.
Кĕрлет вăл хавассăн, кĕрлет йан
та йан.

Кашни кĕтесрехçке хĕрӳ ĕç
кĕрлет,
Кашнин чĕринчех вĕри йун вĕрет.

Хĕвелĕмĕр Сталин пире ăшăтать
Ун ăшă кăмăлĕ пирте йалкăшать.

Ун çутă хĕлхемĕ çĕршывăм çинче,
Ун çутă хĕлхемĕ кашнин чĕринче.

Парать вăл хавaслăх хастар ĕçлеме.
Парать вăл хăватлăх ĕçре çĕнтерме.

Çĕршывăм чечеклĕ. Çĕршывăм
пуйан,
Кунта кашни халăх чăн ырлăх
туйать.

К. Михайлăв

Йурлатпăр йурă

Шур кĕмĕл уйăх тӳперен
Çĕре сапсассăн çуттине,
Илтеп йалан еп каçсерен
Хĕрсен илемлĕ йуррине.

Еп те тăсатăп йуррăма,
Илемлĕ хĕрсемпе пĕрле.
Мухтав та чыс çĕршывăма—
Ун çинчен çĕн йурă кĕрлет.

Пĕр вăхăт йурă шăрансан,
Йуратнă тантăш хĕрсемпе
Çич сакăр мăшăр тытăнса,
Тăшша илетпĕр ыткăнса.

Хитре çич сакăр кӳлепе
Савса хавассăн пăхса кулчĕç.
Пĕрин куллийĕ нумайччен
Ман асăмран каймасăр йулчĕ.

Ман асăмран каймасăр йулчĕ
Пурçăн саппунлă хĕр кулли.
Ĕнер пĕрле вăл утă çулчĕ,
Пайан тыр вырчĕ сар Ульхи.

Ульхи! Пирĕн чипер Ульхи,
Чи маттурри вăл колхозра.
Хавaслă, уçă ун кулли—
Кулли ун манăн асăмра.

Пур çамрăксем те вăйăра
Йурлатпăр йурă тимлесе.
Хавaслă йурăпа йалан
Тухатпăр ир-ирех ĕçе.

Çемен Йелĕм

Физкультмарш

Хĕртет хĕвел
Йаш ӳт пĕве.
Хĕвел ванни—
Чи аванни.
Лăпкамăш
çил—
Шăмшак уççи.
Шывпа тăван
Епир йалан.

Пире пайан
Йе хăть ыран
Çĕршыв
ыйтсан,
Хатĕр йалан—
Йе йурлама
Йе выляма,
Йе ĕç тума,
Йе çапăçма.

Сиксех вĕре,
Сӳнми чĕре!
Шывра ишме,
Çӳлте вĕçме
Сталин аттен
Ăшши пирте.

Сиксех вĕре,
Сӳнми чĕре!
Шывра ишме,
Çӳлте вĕçме
Сталин аттен
Ăшши пирте.

Тăван çĕршыв
Ывăл-хĕрĕ
Парашӳтпа
Çӳлтен сикет,
Самолотпа
Вĕçсе çӳрет,
Çунмасть вутра,
Путмасть
шывра.

Тăван
çĕршыв—
Лăпкă çĕршыв
Анчах, тăшман
Пуçне йатсан,
Унан йăхне,
Сан-сăпатне
Шăлса пĕрĕ
Çут тĕнчерен.

Сиксех вĕре,
Сӳнми чĕре!
Шывра ишме,
Çӳлте вĕçме
Сталин аттен,
Ăшши пирте.

Сиксех вĕре,
Сӳнми чĕре!
Шывра ишме.
Çӳлте вĕçме
Сталин аттен
Ăшши пирте.

Иван Малкой

Аслă, тӳрĕ урам...

Аслă тӳрĕ урам йал вĕçне çитиччен.
Тăваткал пахчасем кашни кил умĕнче.
И, утса та утса килленсе пынăçем
Мĕлкине пăрахас урама йăвăççем.

Уйăх тухрĕ шуса йĕрипен тӳпене.
Ăшă çил вĕрнипе çулçăсем чӳхенеç.
Çамрăксем уç саспа йантратса таврана
Хуг купаспа пĕрле вырмаран таврăнаç.

Вăрăм аслă урам. Еп çуралнă мăн йал
Çамрăксен йуррине ӳкермесĕр таллать.
И, утса та утса пынăçем малала
Пинулмийĕн шарши кăтăклать кăмăла.

Еп утатăп татах. Сывлăш канлĕ чуна.
Кашни пӳрт ăшĕнче електрика çунать.
Сăвăнатăп пăхса хула йевер йала.
Радио куç умне тăратать Мускава.

Тăп тăр кӳлĕ хĕрне мĕлке ыртрĕ пырса,
Çамрăк кăччă лаша шăварать шăхăрса.
Шурă мăнтăр лаша çăмарта пек çавра—
Пĕтĕмпех çавнашкал лашасем колхозра.

Тăп тăр кӳлĕ мана ытарми килĕшет,
Тап-тăр кӳлĕ çинче тулли уйăх ишет.
Пилĕк кантак тухать ун йенне пĕр пӳртрен—
Пирен пӳрт ĕнтĕ çак, пăрахут пек хитре.

Тăрă кӳлĕ мана пайтах курнă хĕрпе,
Епĕр утнă нумай çак çыран хĕррипе.
Малтанхи йурату çулăмлатрĕ ăша,
Йĕр хăварчĕ кунта асăнма сăваçа.

Акă çитрĕм киле, уçмала алăка.
Килкарти ăшăнче шур хурсем какалаç.
Тăкăш усрĕ йари кантăка шăлйенчен
Аллине кăтартса чечексен хушшинчен.

Польă Абрамăвă

Тантăшсем

(К А Л А В)

Пуйăс васкать. Телефон-телеграф йуписем пĕрин хыççăн тепри вĕлтлетсе çеç йулаççĕ: кашни утăмсерен пĕр йупа лартса тухнă тейĕн. Пуйăс васкать. Кашни сехетсерен 50 километр ытлашшинех тăвать вăл. Çанах Галька ку та сахал пек. Тăван йалне халех, çак самантрах çитсе ӳкесшĕн пĕтĕм кăмăлĕпе. хавхаланса шухăшлать Галька.

Шухăшлама сăлтавсем те пур çав. Тăван йал вĕт. Кĕçĕнрен пăхса çитĕнтернĕ кил-сурт. Чи малтанах, киле çитсессĕнех—аннене курмала, аттене. Ыталамала вĕсене, чуптумала. Институтăн йулашки курсне отличнă паллăсемпе вĕренсе тухни çинчен каламала. Каламасан та пĕлеççĕ-ха та... çырупа пĕлтернĕччĕ. Тепĕр хут каласа памала вĕсене, хампа пĕрле тепĕр хут хавaслантармала. Каламала, вĕренсе тухнă хыççăн Кавказа канма кайни çинчен. Кавказ илемлĕ çĕр чăмăрĕ çинчи чи илемлĕ çĕршывăн чи илемлĕ кĕтесĕпе атте-аннене паллаштармала.

Унтах тантăшсем ак. Альтуç. —Епĕ киле çитсесĕнех ĕнтĕ ман пата Альтуç чупса пырать,—тет Галька. Хăйĕн тантăшне вăл, сĕт-çу ферминче ĕçлекен стахановкă Альтуçа йаланах ăшă кăмăлпа ыр сунса асăнать, кирек-ăçта пулсан та унпала çыру тăрăх çирĕп çыхăну тытать. Нумайах та пулмасть çырса йанăччĕ-ха Альтуç. Хăйĕн ĕçĕнчи çитĕнӳсем çинчен Галькана пысăк хавaслăхпа çырса пĕлтернĕччĕ. Çитĕнӳсемпе лăпланса лармала марри çинчен, вĕсене татах çĕнетсе çĕклентересси çинчен те каласа ĕнентернĕччĕ. Анчах çырури пĕр пуплев, йулашки пуплев Галькана питĕ те тĕлĕнтерет. „Есĕ йатлатăн-ха мана килсессĕн, пĕлетĕп ман çине çиленетĕн", тенĕ Альтуç. Мĕне пĕлтерет ку? Мĕншĕн йатламала-ха чи çывăх тантăша, мĕншĕн çиленмеле? Çук пек сăлтавĕ.

Пуйăс васкать. Вĕçĕмсĕр вăрман. Пайан кану кунĕ. Акă уçланкă. Уçланкăра çамрăксем мăшăрăн-мăшăрăн утса çӳренине кантăкран пăхса иртрĕ Галька. Мĕнле телейлĕ вĕсем. Уçланкăри уçă сывлăш пекех уçă та тутлă вĕсен ĕмĕтлĕ кăмăлĕсем. Уçланкăри чечексем пекех илемлĕ. илемлĕ те çутă вĕсен сăн-сăпачĕсем. Йулчĕ уçланкă. Часах курăнми пулчĕ.

Аса илчĕ Галька. Иртнĕ çулсенче вăл йалта, каникул вăхăтĕнче. çав уçланкăри çамрăксем пекех сахал мар алла-аллăн тытăнса çӳренĕ, куккук аватнине итленĕ, çеçке пуçтарнă,—ун çумĕнче Мишă пулнă. Мишă Галька пекех çамрăк, Галькăпа пĕр техникумрах вĕренсе тухнă. Галькăсен йалĕсемех. халĕ вăл çав йалти учител пулса пурăнать. Мишă... Сахал мар аса илет ăна Галька. Çамрăклах вĕт, ачаранпах пĕрле ӳснĕ. Ĕçре, вĕренӳре паллашса çывăххăн тăванлашнă. Пĕрле пурăнасси çинчен ун чухне вара икĕ çамрăкăн пурнăçĕ тата та илемлĕрех, телейлĕрех пуласси çинчен йаланах калаçатчĕ Мишă. Галька та унăн шухăшне хирĕçлемен. Институт пĕтерне хыççанах ку ыйтăва татса парасси çинчен нумай-нумай шутласа çӳренĕ. Йулашкинчен вара: „Ну йурĕ" тенĕ. Ку шухăша вăл нумайах та пулмасть-ха Мишăна патне тепĕр хут çырепле çырса йанă. Анчах темшĕн Мишăран ответ килмен. Мĕншĕн? Ăна Галька пĕлмест.

Пĕр пысăк станцăра Галькăсен вакунне тепĕр çĕнĕ пассажир кĕчĕ. Галька ăна лотчик тумтирĕпе пĕрремĕш хут çеç курать пулин те часах палларĕ:

— Васа! Ăçта кайатăн?..

— Кам? Галька! —Галька аллине хыттăн хыттăн чăмăртарĕ лотчик. Унăн сулă сăн-сăпачĕ хăмла çырли пек хĕрелчĕ. Саркăм тĕслĕрех çӳç пайăркисемпе килет шӳлĕн витĕнсе тăракан çамки çине тар пĕрчисем шăрçаланса тухрĕç.

Пĕрне-пĕри ыйту хыççăн ыйту пачĕç вĕсем. Иккĕшĕн те пĕр çул, иккĕшĕ те пĕр йала таврăнаççĕ.

Васа Галькăна цикçанхинчен те ытларах килĕшрĕ:

— Вĕренсе тухрăн апла. Инструктăр пулатăн. аероклубра ĕçлеме пулать тетĕн-и?

Васа ăна кăмăллăн ответлере, хăйĕн малтанхи сăмахĕсене çирĕплетре. Мĕн тери хавaсланчĕ Васа. Галька ăна нихăçанхинчен те ытларах килĕшрĕ:

— Отличница апла ес. Шупашкарта аслă шкулсенчен пĕринче ĕçлеме пулать тетĕн?

Вĕсем пĕр-пĕрин çине тепĕр хут, тата тепĕр хут чĕрери чи ăшă кăмăла пĕр сăмахсăрах уçăмлăн кăтартса паракан туйăмлăхпа пăхса илчĕç. Çак вăхăтра Галькăна Мишă та, Альтуç та аса килмерĕ.

Пуйăс васкать. Тул çуталса килет. Таçантанпа кĕтнĕ станцă. Галькăпа Васа йалĕ тĕлĕнчи станцă инçех те йулмарĕ.

* * *

Укăлчаран йал хушшине кĕрсе çеç сăркĕрнĕччĕ Галькăпа Васа,—Мишăпа Альтуçа тĕлпулчĕç.

— Килтĕр-им?—тере те Альтуç, чи малтанах Васа çине пăхса илчĕ, хăйне йунашар тăракан Мишă çине, унтан Галькăна ыталаса чуптурĕ.—Ан вăрç мана, ан йатла. Сывлăх сунма пултаратăр. Пирĕн туйа ĕлкĕреймерĕр—каçарăр...

— Туй! Туй турăр-и?

Галька ăнланчĕ. Йулашки çыру çине Мишă мĕншĕн ответ парайманнн те. Альтуç çырăвĕнчи ăнланусăр пуплев те ĕнтĕ тинех уçăмлăн паларчĕç.

Самантлăха вĕсем тăваттăшĕ те сăмах чĕнеймерĕç. Пĕр-пĕрин çине кусран-куçа пăхса çеç йал-йал кулса тăчĕç.

— Йатлама сăлтавĕ çук,—тере Галька.—Телейлĕ пулăр!

Çамрăк тантăшсен сăнĕсенче хавaслăх шевли çутăлса вăй-выларĕ. Телейлĕ çамрăксем килеле уттарчĕç.

Чул-Кăмака йалĕ. Шăхасан р-нĕ.

Йурласа кĕлте çыхаççĕ

Йурласа хĕрсем кĕлте çыхаççĕ:
„Иртрĕ çил-тăманлă сив хĕл каçĕ,
Йат йат тăрăх хаљ çĕр уйăрмаççĕ,
Ушкăнпа хастар ĕçе тухаççĕ.

Оă, мĕн пек ес, ырлăх, аслă пирĕн,
Йăлтăран ес йанкăр çутă ирен,
Хурçă кайăксемпеле вĕçен,
Тинĕçри карапсемпе çӳретĕн,
Ырлăх, есĕ хирсене кĕретĕн,
Шавлă сассупа мухтан ĕçе.

Йурласа хĕрсем кĕлте çыхаççĕ:
Халăхсем тăванлă пурăнаççĕ,
Йуратаççĕ ĕмĕре ĕç пек:
Епир лăпкă пурăнăç тăватпăр,—
Çĕршывăма куç пекех сыхлатпăр,—
Тухма хатĕр пăшалпа хĕçпе!

Д. Йегорăв.

Кӳкеç, Шупашкар р-нĕ,

Куçма Çергейĕв

Чикĕ хĕрринчи йалта

(К А Л А В)

Халиччен йалăн куç витĕр марри çинчен пăшĕрханса калаçакансем, Марфă инке, хыçалти пахчара чылай çул кайала йалтан тухса тарнă Тавăт кулакка курнă. Тавăт Марфă инкерен упăшкинчен йулнă ухута пăшалне сутма ыйтнă, анчах Марфă пăшал илсе тухнă çĕре хăй темрен хăраса тарма та ĕлкĕрнĕ.

Колхозри комсомол организаторĕ Метри Марфă инкепе калаçнă хыççăн вăхăт йулавутпа погранзаставăна васканă.

Колхозниксем каласа панă тăрăх, Тавăт кулак 1929 мĕш—çулччен йаланах йалта пурăннă. Унăн нимĕн сăк тупăш паракан вутармане пулнă. Кунсăр пуçне вăл çĕр тара илсе акса кунсерен пуйса пынă. Тавăт пиччĕшĕ, Харитун, патша çарĕн офицерĕ пулнăскер, 1920 çултах Польшăна тухса тарнă пулнă.

1929 çулта, колхоз йухăвĕ сарăлма пуçласан, Тавăт хăйĕн вутармане тата колхоз председателĕн килçуртне вут тĕртсе хăварнă та килĕнчен тухса тарса кусран çухалнă. Ăçта пурăннă вăл—ăна никам та пĕлмен. Хăшпĕрисем ăна пĕр-пĕр савăтра ĕçлет пуль тенĕ, теприсем Польшăна Харитун патне тухса тарнă пуль йе çак таврарах шпион пулса çӳрет пулĕ тесе шутланă.

Ку шухăшпа Мĕтри те килĕшнĕ. Погранзаставăна çитсенех вăл хăй мĕн илтни çинчен начальнике пĕлтернĕ.

* * *

Вăçĕ кун йĕрленĕ пограничниксем Тавăта, анчах ун йĕрне ниçта та тупайман. Тавăта тытма чăнах та хĕн пулнă, мĕншĕн тесен, çак таврара çуралса ӳснĕскер, вăл чикĕ хĕрринчи çĕршыва питĕ те лайăх пĕлнĕ, тепĕр йенчен вăл йалта хăйне пытарса усракан çын та тупма пул арнă.

— Вăтă кайăкăр çав, — вăрçнă Мĕтри, йалан пограничниксемпе çӳрекенскер.—Ух, чĕйе етем вăл Тавăт, тилĕрен те чейе!

— Ан хăра,—йăпатнă Мĕтрине унпа иртнĕ кĕркунех паллашнă пограничник Сулейманăв.—Ниçта та тараймасть. Тахти, лапах кĕрсе ӳкет ак пирĕн капкăна.

Кăнтăр апачĕ çитсен Сулейманăва начальник чĕнсе илнĕ. Сулейманăв чырса кĕрсе доклад тусан, начальник ăна сывлăх суннă, хăйне хирĕç ларса калаçма тытăннă Вăл йаланхи пекех савăнăçлă пулнă, ун пичĕсем çуталнă, тутисем кулса тăнă.

— Ес пĕлетĕн-и Марфă инкене? —тенĕ начальник.

— Пелетĕп, пĕлетĕп.

— Ну пулах пĕлетĕн. Ара, сан пачче вĕт-ха хĕдле ун патĕнче пултăмăр, вăл пире шпион тытса пачĕ...

— Çапла, начальник йулташ.

— Вот, пайан ман ун патĕнче тепре пулма тĕл килчĕ. Пелетĕн и мĕнле ĕç?

— Пелетĕп,—терĕ Сулейманăв.—Мана Мĕтри каларĕ.

Начальник пуçне çĕкленĕ, куçĕсем çуталнă.

— Çавăнпа чĕнни те еп сана,—тенĕ вăл кулса.—Кĕçĕр сыхлас пулать.

— Итлетĕп, йулташ начальник!

Сулейманăв ĕнтĕ хаљ нимĕн çинчен те шухăшламан. Ун пуçĕнче Тавăт пулă. куç умне те вăлах—вăта, анчах йуман пек тĕрекле çиллес çын—тухса тăнă. Кĕçĕр Тавăта йепле те пулсан тытас ĕмĕтпе вăл чикĕ хĕрне тухса утнă, çак ĕмĕтпе çурçĕрчен ниç йускалмасăр кутамас йуман йăвăççи çумне таййанса тăнă.

Сулейманăва чикĕ леш йенчен килекен сасăсем канăç паман. Ку сасăсем пĕчĕккĕн чикĕ хĕрринеле çывхарса килнĕн туйăннă, анчах тата пăртак тăрсан вĕсем каллех чикĕрен çухрăмра йе çухрăм çурăра илтĕннĕ. Унта такам лаша хăваланă, машин сасси çатăртатнă. Ку сасăсем нервăна тулаштарнă, халхана вĕçĕмсĕр йĕкĕлтесе тăнă.

— Ах, çĕр çăтманĕ, пĕр-пĕр мул таврашĕ хресченсене çĕрхута ĕçлеттерет пулас,—вăрçнă Сулейманăв.

Çурçĕр тĕлĕнче Сулейманăва çывхарах сасă илтĕнсе кайнă. Тинкерсе пăхнă та вăл, хăй куç умĕнчех темле хăрăвçă кайăк сиккипе чупса иртнине курнă. Урăх нимĕн те пулман. Вăрман çав-çавах чĕмсĕр ларвă, мĕнпур чĕр чун çутăлас умĕнхи тугла ыйха кайнă пулнă.

Ирхине сывлăм ӳкнĕ çерем çийĕн Сулейманăв заставăна таврăннă. Ăшра вăл хăйĕнне кăмăлсăр пулнă, Тавăта тытайманшăн пăшăрханнă.

Çинçе сукмак йал хĕррипе йăвкаланса иртнĕ. Сукмак пĕр йуппи—йал патне, тепри погранзаставăна илсе кайнă.

Урам хушшинче никам та курăнман. Сулейманăв пахча хыçĕсене çаврăнса пăхнă. Унта пĕр хĕрарăм—ирхи апат пĕçерме пулас—çĕрулми кăларнă. Унтан айакрах мар çатан карта çумĕпе йал вĕçнелле пĕр çамрăк çын çăмăллăн утса çывхарнă. Ăна пограничник часах палласа илнĕ, ку комсомол организаторĕ Мĕтри пулнă. Мĕтри те, Сулейманăва курса, алне сулма тапратнă.

— Мĕн ес ирех йартлатса çӳретĕн?—тенĕ Сулейманăв Мĕтри аллине чăмăртаса.

— Ĕç пур. Района кайас пулать.

— Района? А Тавăт пирки ĕç мĕнле?

— Çĕнни нимĕн те çук.

— Йапăх.

— Ниушлĕ тытаймăпăр?

Пограничник чĕнмен.

— Ман шутпа вăл йалтах,—тенĕ Сулейманăв чылайччен тăхтаса тăнă хыççăн.

— Йалтах тетĕн. Пулма пултарать.

— Кил-ха, кам пытарса усрама пултарать ăна?

— Тӳрех татса калама йăвăр. Анчах мăн шутпа, ак çак хĕрарăма шанма çук,—тенĕ Мĕтри хĕрринчен иккĕмĕш кил çине кăтартса.—Вăл—ун хурăнташĕ—ку пĕрре, унтан етемĕ те шанчăклах мар.

— Ес пахчана йул,—тенĕ Сулейманăв,—епĕ ун патне пӳртне кĕрем Мĕн те пулин пулас пулсан, пăшал сассине итле. Йурать-и?

Тепĕр минутрăн Сулейманăв лутрарах кăна пӳрген çилник алăкĕ умĕнче тăнă. Вăл алăка виçĕ хут чĕн пӳрнепе шаккăпа.

— Кам унта?

— Епĕ, пĕр минутлăха...

Алăк уçăлнă та, пограничник хăй умĕнче лутрарах кăна пӳсилĕ, тулли те хитре хĕрарăм тăнине курнă. Вăл малтанах шанчăксăррăн пахакан куçĕсемпе пограничник çинчен тем ыранă, унтан, çавăнтах питрен улшăнса, алăкран иртме хушнă.

— А, пограничник?—Пожалстă, кĕрсемĕр. Пограничник пирĕншĕн кĕтнĕ хăна...

Сулейманăв, алăк урати урла каçнă та, тĕпелеле иртнĕ. Пӳрт тап-таса пулнă. Шурă чĕнтĕрлĕ пусмапа карнă чӳречесем çинче чечексем ларнă. Стенасем çинче тĕрлĕ плакатсем çакăнса тăнă.

— Вăрçмастăри ырех чăрмантарнăшăн?

— Çук, çук, ма вăрçас. Пожалстă. Кил, салтăн, апаланăпăр.

Хĕрарăм тирĕк йатса çилнике чупса тухнă. Çав вăхăтра пограничник кăмака хыçне, сĕтелпе сак айĕсене тĕрĕслене.

Тирĕк тулли хăймалă турăх илсе кĕнĕ хĕрарăм каллех ăна салтăнма сĕннĕ. Пограничник ӳкĕте кĕмен, вăл хĕрарăм хулпуççийĕсем урлă пĕрре урамала, тепре тĕпелелле çак айнелле пăхнă. Кăна кура хĕрарăм, Сулейманăв патнех пырса, шăппăн:

— Ман упăшка çук, ан хăра, хăна пул, манран чару пулас çук,—тенĕ. Хăй, пограничник çумне лăпчăнса, ăна икĕ аллипе майран çупăрласа илнĕ. Пограничник, унăн аллисене хыттăн илсе пăрахса татах тĕпелеле иртнĕ.

Çилникрĕ темле йапала ӳкнĕ сасă илтеннĕ. Ăна илтсенех Сулейманăв, çав-çавах ун çумне лăпчăнакан хĕрарăма хыттăн тĕртсе йанă та, çилнике чупса тухнă. Анчах çилникре никам та курăнман. Сулейманăв васкаса картишне аннă. Кунта вăл вĕрлĕх карта урлă каçакан çынна курах кайнă. Ун патне тапса сикнĕ, хыçалти пахчаран йенчен йут çынна хирĕç Мĕтри чупнă.

— Чарăн, перетĕп! Чарăн!

Мĕтри йут çын çине арăслан пек сиксе ӳкнĕ, ун аллинчи кĕске пăшала хăй аллине туртса илнĕ. Унччен те пулман хăй хăйар сасăпа, нечĕк ача пек, çар-и-ы! сухăрса йанă. Пăхнă Сулейманăв—Мĕтри йут çын çаварăнчен йулашнă пӳрне турса каларнă.

— Ы... ы!—шăлне шатăртаттарнă йут çын. Ун çăварĕнчен шурă кăпăк тухнă. Йунпа тулнă куçĕсем пограничник револьвĕрĕ çине тимсĕлсе пăхнă.

— Çаклантăн Тавăт, тулчĕ шăпу... йатă!—тенĕ шăл витĕр Мĕтри. Вăл старике çапма тесе аллине çĕкленĕ, анчах ăна Сулейманăвăн тĕреклĕ аллисем тытса чарнă.

— Ну, ăйра пар районă, кăçăр чăрмантарнăшăн,—тенĕ вăл.—Аллуна халех кĕрсе çыхтар.

Сарт хыçĕнчен ирхи хĕвел çĕклевсе тухнă. Колхозниксем кĕтӳ хăвалама пуçланă.

…пони провокацийĕ пирки йут çĕршывсенче мĕн калаççĕ

АНГЛИ

„Таймс" ятлă хаçат Совет Союзĕпе Манчжури чиккинчи ĕçсем пирки ак çырать: „Тавлашуллă салтав пулса вырăн нумай сумсем хушши Росси… пулни… уçсе…" палларса т… Кунти пĕлекен çынсен шухăшĕ т… тытăну пулнăшăн Японецсем айăп… Тытăçу пусланнă тĕле хатĕр танă …пони çарĕсен хисепĕ пысăк пулнинчен пĕлсе çырать хаçат. Англире ытти хаçатсем те çакăн йĕвĕрлех çыраççĕ.

ЧЕХОСЛОВАКИ

Совет Союзĕн Инçет-Хĕвелтухăç чиккинчи событисем çине пит пысăк тимлĕх… пăхакан Чехословаки пичечĕ, совет м… Корея-Манчжури территорине çине вĕçсе пынă текен суйă хыпар …рки ТАСС хирĕçлесе пĕлтернине ни… Заозерная высота Совет Союзĕн пулни çинчен калакан документсем …вет пичечĕнче тухни çинчен тата Японии совет чиккинчи провокацине хирĕç …теслесе массăлă митингсем туни çинчен …рса пĕлтерет. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи событисем çинчен калакан пĕлтерусене: Японии ССР Союзне хирĕç вăрçа пус…шăн провокаци тăвать", „Советсем Японии провокацийĕсене текех тÿссе тăраслăн мар" текен заголовкăсем парса пичетлеççĕ.

КИТАЙ.

Японии çарĕсем совет территорийĕ çине касса кĕни çинчен калакан ТАСС пĕлтерĕвĕсене Китай хаçачĕсем курăнмала вырăнсенче пичетлесе калараççĕ. „Синьуажибао" хаçат умстатйара çапла çырать: „Японии провокацин салтавĕсем çак…ем пулса тăраççĕ. Японии военщинин Японире патриотисăмла кăмăл çĕклеме …рашни, Китай халăхĕн нацилĕ вăрçăра ирĕппĕн тăрса кĕрешес кăмăлне çемçетсе тăрашни, Японишĕн тата Китайа ĕнтермеле тăвасшăн тăракан Китайри …лементсене Японийĕ уступкăсем пăрарма ĕмĕтленскенсене сăлтав туса пама …рашни, çавăн пекех тата коммунисăмла хирĕç кĕрешетнĕр текен суйăлăхпа тĕнчери державăсен тивĕçлĕхне урăх çĕреле …рса йама тăрăшни". „Квантун çарĕн, Японин Манчжурири оккупацилĕ çарĕ) фашисла елеменчĕсене Хĕрлĕ Çар вăйлăн …ании,—тет малала хаçат.—пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне пулăшу парĕ".

ИСПАНИ

Совет Союзĕпе Манчжури чиккинче Японии провокаци туни çинчен Испани хаçачĕсем халь те чĕрĕрен сÿтсе-йаваççĕ. Чылай хаçатсем, Совет Союзĕ татăклă та çирĕп позици йышăннипе Японии провокатăрĕсем ирĕксĕрех кайала чакаççĕ, тесе кăтартса параççĕ. Коммунисла хаçат „Френте рохо" Совет Союзĕ Японии агрессăрĕсене отпор пама пĕлет, мĕншĕн тесен вăл хăватлă Хĕрлĕ Çар, Флот тата авиаци çине тайăнса тăрать, вĕсен хыçĕнче пĕтĕм совет халăхĕ тăрать, тесе çырать.

ШВЕЦИ тата НОРВЕГИ

Скандинаври пур хаçатсем те пекех ТАСС пĕлтерĕвĕсене—Японии провокацине хирĕç тăракса сĕкленĕ хум пĕтĕм Совет Союзĕ тăрăх сарăлса кайни çинчен. Совет Союзĕнчи пĕтĕм халăхсем хăйсен тăван çĕршывне пур майсемпе те сыхлама хатĕр тăни çинчен калакан пĕлтерÿсене пичетлесе калараççĕ.

Пур хаçатсем те Японии позицийĕ тĕрексĕррине тата Совет Союзĕн хăй чиккисене сыхлас кăмăле çирĕппине палăă тăваççĕ. Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи событисем çинчен калакан пĕлтерÿсене Швеци хаçачĕсем: „Совет Союзĕнчи патриотла хастарлăх йухамĕ", „Совет трактăрисĕсем танксем çине ларма хатĕр" текен заголовкăсем парса пичетлесе калараççĕ.

(ТАСС)

Колхозсенчи столовăйсем

ЙЕТĔРНЕ. „Ударник", „Çĕнĕ çул", „Çĕнĕ пурнăç", „За коммунизм" тата Сталин йачĕпе тăракан колхозсенче тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксем валĕçи уйхирте пĕрлешÿлĕ столовăйсем организацилеçĕ.

Шăматри „Ударник" колхоз 39 ача валĕçи йаслĕ уçнă.

С. Н. Важорăв.

Отличник-учителсен канашлăвĕ

Августăн малтанхи кунĕсенче РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ кĕçĕн тата вăтам шкулĕсенчи отличник-учителсен канашлăвне иртерет. Вăл канашлăва пурĕ 750 отличник учителе чĕннĕ.

Пирĕн Чăваш республикĕнчен çак канашлăва 13 учител-отличник кайаççĕ. Вĕсен хисепĕнче: Тускелри (Йелчĕк р.) пуçламĕш шкул учителĕ И. С. Сергейев, Ишекри (Ишлей р.) вăтам шкул учителници Х. Д. Дмитриева, Елĕкри вăтам шкул учителници В. К. Куçмина, Кокшакăсинчи (Çĕрпÿ р.) пуçламĕш шкул учителĕ А. И. Иванов тата ыт. те.

Отличник-учителсен канашлăвне кайма палăртнă йулташсенчен 6 çын халĕ Мускава тухса кайнă. Гепĕр 7 çын августăн 10-мĕшĕнче тухса кайаççĕ.

Чăваш йуррисене граммофон пластинкисем çине çырнă

Çак кунсенче чăвашсен государствă хорĕ Мускавран таврăнчĕ. Мускава вăл чăваш йуррисене граммофон пластинкисем çине çыртарма кайнă.

Грампластинкăсем çине пурĕ 14 йурă çырса хăварнă, пуринчен ытла вĕсем Павлăв композитăрăн йуррисем. Пластинкăсем çине, çыраннă йурăсем çаксем: „Хайматлăх йурри" (Павлăв музыки), „Кай, кай Ивана" (В. П. Воробйов), „Туçи йурри" (Белый), „Улăх йурри" (Йегорăв), „Çамрăк ĺотчиксем" (Г. Лисков), „Вĕлле хурчĕ" (Павлăв), „Куккук" (Г. Лисков), „Туй" (Павлăв) тата ыт. те.

Мускавра пулнă чухне чăваш хорĕ ийулĕн 5-мĕшĕнче Коминтерн радиостанци урлă пысăк концерт пачĕ.

Инвалидсен çурчĕсем

Халĕхи вăхăтра пирĕн республикăра ĕçре тата вăрçăра аманнă инвалидсем валĕçи 4 çурт тунă (Йетĕрнере, Кувакинă районĕнчи Преображенски йалĕнче, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Покровски йалĕнче тата Шупашкар районĕнчи Усалкă йалĕнче). Вĕсенче пурĕ 127 инвалид пурăнаççĕ.

Халĕ тата çавăн пек инвалидсем валĕçи Трак районĕнче çурт тума тытăннă. Ăна колхозри пулăшу кассисен шучĕпе тăваçĕ.

Чăваш АССР Социаллă обеспечени Халăх Комиссариачĕ кăçалхи çул 46 инвалида инçетри курортсене йусанма йанă. Инвалидсене ĕçе йурăхлă туса тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлеме йавăçтарма комиссариат кăçал 103 пин тенкĕ укçа уйăрнă.

Пулăшу илчĕç

ВĂРНАР. Çĕрнÿйел йалсоветĕнче иртнĕ çулсенче нумай ачалă пирки государстваран Матрена Харитонăвă çеç пулăшу илнĕччĕ. Кăçал унсăр пуçне тата 3 колхозницă—Кириллăвă, Çеменăвă, Дубанăвă 2000-шер тенкĕ илчĕç.

Вĕсем кашнийех çĕнĕ зайома 100-шер тенкĕлĕх çыранса, укçине тÿлесе татрĕç.

Хайсен ачисем валĕçи костюмсем, атă-пушмаксем тата вĕренмели хатĕрсем илсе пачĕç.

А. Крислов.

Çуралакансен йышĕ ÿсет

СЕНТĔРВĂРРИ. Районра çуралакансен йышĕ çулран çулах ÿссе пырать.

1936 çулта районĕпе 1674 çын çуралнă, çак шутран хулара 168 çын çуралнă.

1937 çулта районĕпе 1965 çын, вăл шутран хулара 206 çын çуралнă.

Гр. Çмирнов.

Саслă кино

Ийулĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа Турхантта саслă кинокартинăсем кăтартма тытăннă. Малтанхи кунсенче „За Советскую Родину" ятлă саслă фильм кăтартнă.

М.

Самурайсем Китайра



Мирлĕ халăх çине вĕсем бомбăсемпе снарядсем пăрахаççĕ…



Вăрçă хирĕнче вĕсем тупăсемпе винтовкăсене пăрахса тараççĕ…

В. Лисевичпа Й. Дмитрийев ÿкерчĕкĕ.

Хĕвелпе, шывпа тата уçă сывлăшпа ытларах усă курма тăрăшăр

Çулахи вăхăтра уçă сывлăшпа, хĕвелпе тата шывпа усă курни сывлăхшăн питĕ паха. Анчах вĕсемпе—хĕвелпе тата сывлăшпа усă курма пĕлни кирлĕ. Кашни çынăн сывлăхĕ пĕр пек мар. Çавăнпа хĕвелпе тата шывпа кашни çынах пĕр пек усă курма пултараймасть.

Хĕвелпе йе шывпа йĕркелĕ усă курни етем ÿт-пĕвне сыватса çирĕплетет. Çирĕпленсе писĕленнĕ ÿт-пĕвлĕ çын çуркуннекĕркунне йе тата хĕллехи çанталăк улшăнăвĕсене сийĕн курмасăрах (чирлемесĕрех) иртерме пултарать. Кĕркуннепе çуркуннехи вăхăтсенче грипп йе ангинă чирĕпе аптракансем пулаççĕ. Ку чирсенчен т. ыт. чирсем: ревматисăм, бронхит, плеврит, чахоткă тата ытти чирсем те пуçланса кайма пултараççĕ.

Çулахи вăхăтра хĕвелпе, шывпа тата уçă сывлăшпа çителĕклĕ усă курса йулсан, епĕр чылай чирсенчен хăтăлма пултаратпăр.

Малала епĕ хĕвелпе усă курнă чух мĕн çинчен асра тытмалине каласшăн.

Хĕвелпе йе шывпа усă курас текенĕн чи малтанах тухтăр патне кайса сывлăха тĕрĕслеттермеле. Вăра тухтăр хушнă пек усă курма тытăнмала. Пуç ыратса çÿрекен, вăй йе йун сахалтарах çынсен, маларипе чирленĕ çынсен хĕвел çинче хĕртĕнме йурамасть.

Хĕвелпе усă курма тытăннă чух хĕвел питтинче талăкра 10—12 минутран ытла пулмала мар. Вăра кашни кунах 5—10-шер минут хутшăнтарса пырса талăкра 1—1,5 сехетчен çÿреме йурать. Хĕвелте выртса хĕртĕнни усăлах мар, утса çÿресен аванрах, кун пек тусан етем ÿт-пĕвĕ пур йенчен те пĕр тикĕс хĕртĕнет.

Хĕвелте çÿренĕ чух пуçа, куççене тата ачаш вырăнсене шурă тутăр çыхмала йе çÿхе çипуç тăхăнас пулать. Çĕр çине, курăк çине нимĕн сармасăр тата çийелти тумтирпе выртма йурамасть. Хĕвелте выртнă чух хаçат, кĕнеке вулани кусшăн сийенлĕ.

Апат çийес умĕн йе апат çинĕ хыççăн (30—40 минут иртиччен) хĕвелте хĕртĕнме йурамасть. Ÿт-тир ытлашши пиççсен вăхăтлăха хĕртĕнме пăрахмала. Пиçнĕ вырăнсене вазелин сĕрмеле.

Вайсăртарах çынсен хĕвелте питĕ асăрханса та виçелĕ хĕртĕнмеле. Пĕркесĕр хĕртĕнсен вăй пĕтсе кайать, сывлăх, вăй сахалланать, çын çывăраймасăр аптăрать, апат анмасть т. ыт. те.

Хĕвелте хĕртĕннĕ хыççăн шыва кĕрсе çăвăнма йе уçăрах шывпа чÿхенме йурать.

Сывлăшпа усă курнă чух çаксене астумала: уçă сывлăшра ăшă 15—16. градусран кайа мар пулсан, çил çук чух 10—12 минут хушши чупса, йе хыттăн утса çÿремеле, мĕнле те пулин ĕçре пулмала. Малала кашни талăкра 5—10 минутшер хушса пырса 1 — 1,5 сехете çитиччченех çÿреме йурать. Çÿсенеччен, ÿт çине хупшатри тухиччен çÿреме йурамасть, çÿсене пуçласанах кĕпе-йĕме тăхăнмала, кирек мĕн ĕçлесе ăшăнмала.

Уçă сывлăшра çÿренĕ хыççăн ÿт-пĕве шывпа чÿхесе уçăлтарма тата ывăç тупанĕпе хыттăн сăтăрма (массаж тума) йурать.

Шывпа усă курнă чух ака мĕн çинчен асра тытмала: шыв ăшши 15—16 градусран кайа мар пулсан, шыва кĕме йурать. Чи малтан кĕнĕ чухне шывра 4—6 минутран ытла пулмала мар. Ишсе çÿреме йурамасть. Малтанах кĕрсен ишнĕ чух ăнсăртран шăнăр хутланнипе шыва анса кайма пулать.

Шыв сивĕрех пулсан, хăвăртрах вырăнтан вырăна куçса çÿрес пулать, тутасем кăвакариччен, чĕтрекене йериччен тăма йурамасть. Тарланă хыççăн шыва кĕрес шухăша нихăçан та ан тыт.

Шыва кĕнĕ чух ывăнма пуçласанах, чĕре сикме тытăнсан хăвăртрах тухас пулать. Апат çинĕ хыççăн шыва сехет çурă йе икĕ сехет иртсен тин кĕмеле.

Çакăнта кăтартнисемпе усă курнă чух чирлĕ çынсен çакна астумала. Ревматисăмпа чирленĕ çынсен ÿт-пĕве çÿсентерме, шăнтма йурамасть.

Чĕре чирлĕ çынсен чупма йе хăвăрт утма, шывра ишме, турник çинче йе йăвăр йапаласем йĕтса выляма мар. Ÿпке чирлисен чупма, шывра ишме, кимĕпе йăраннă чух кĕсменпе авăсма йурамасть.

Пĕр сăмахпа каласан, пур тĕрлĕ чирлĕ çын та хăй сывлăхĕ майĕпе хĕвелпе, сывлăшпа йе шывпа усă курма пултарать, анчах чи малтанах хăйĕн сывлăхне тухтăр патне кайса пăхтармала. Вăра тухтăр каланă сăмахсене тĕрĕс тытса пымала.

Ишлей пульницинче ĕçлекен врач СТОЛЬАРОВ.

30 путьовкă пачĕç

ÇĔРПУ. 1937—38 вĕренÿ çулне ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн, профшкулта вĕренекен студентсене — отличниксемпе ударниксене 30 ачана канмали çуртсене кайма путьовкăсем пачĕç.

Халĕ путьовка илнĕ студентсем пурте канаççĕ.

А. Иванов.

92.000 тенкĕ тÿленĕ

СЕНТĔРВĂРРИ. Районта йышлă çемйеле ача амăшĕсем 101 çын шутланаççĕ. Кăçал вĕсене государствă мĕн пурĕ 216.000 тенкĕ укçа парса пулăшать. Халĕ вĕсене 92.000 тенкĕ укçа тÿленĕ. Вăл шутран районта 4.000 тенкĕ илекенсем 7 хĕрарăм шутланаççĕ. Йышлă çемйелĕ ача амăшĕсене кăçал тата 124.000 тенкĕ укçа тÿлемеле.

Гр. Çмирнов.

Аратлă тăкасем

СЕНТĔРВĂРРИ. Çак кунсенче района Дагестан АСС Республикĕнчен „местный меринос" йахлă 100 тăка илсе килчĕç. Вĕсене районри колхозсене сутаççĕ. Района аратлă тăкасем илсе килни, колхозсенчи сурăхсен аратне лайăхлатма пулăшать.

Гр. Çмирнов.
Пав. Васильйев.

Стройкăсенче ĕçлекен кадрсем

Шупашкарти коммуналлă строительствă техникумĕ стройкăсенче ĕçлеме вăтам кадрсем хатĕрлекен республикри пĕртен-пĕр шкул пулса тăрать. Техникума организациленĕренпе (1930 çултанпа) 188 техник-строител кăларнă. Вăл шутра чăвашсем 126 çын. Техникумран вĕренсе тухнисем Совет çĕршывĕн пур кĕтесĕнче те: Дагестанра, Тутар республикĕнче, Алтай крайĕнче т. ыт. çĕрте ĕçлеççĕ.

Кăçал ийуль уйăхĕнче техникумра 6-мĕш выпуск пулчĕ. Техникум 44 техник-строител кăларчĕ. Вĕсенчен 6 çын „отлично", 21 çын „хорошо" паллăсемпе диплом тытрĕç. Халĕ вĕсем те тĕрлĕ республиксенче ĕçлеççĕ.

Техникум çултан çулах вăйланса пырать. Икĕ çул кайарах пур студентсене те стипенди пама май пулман, вĕренÿ кабинечĕсем, учебниксем т. ыт. çителĕксĕр пулнă пулсан, халĕ техникумра вĕренÿ ĕçне лайăх организацилеме пур кирлĕ условисем те çителĕклĕ. Техникумра столовăй пур. Общежити лайăх. Вĕренÿ кабинечĕсем, лаборатори пур. Учебниксем тата вĕрентекенсем те çителĕклĕ.

Çаксене шута илсе РСФСР Коммуналлă хуçалăх Халăх Комиссариачĕ 1938—39 вĕренÿ çулĕнче 90 çын вĕренме илме ирĕк пачĕ. Кутăранччен техникума кĕме 130 çын ыйту панă. Августăн 20-мĕшчен ку хисеп ÿсмеле.

Техникум деректăрĕ Астин.

Участкăсене аван тытаççĕ

ТУТАРКАС. Тойкилтĕ йалсоветĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" тата Тельман йачĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсем çумне çирĕплетнĕ çулсене лайăх тытса тăраççĕ. „Çĕнĕ пурнăç" колхоз тырă вырма тухас умĕн çул çине 2 420 лав хăйăр турттарса хатĕрлерĕ. Çулĕре лайăх тытса тăрассипе уйрăмăнах Спиридонăвăпа Васильйĕв йулташсем тăрăшса ĕçлеççĕ.

Федотăв.

ХУЛА ТĂРĂХ

Çăка, хурăн лартрăмăр та…

— Хулана илемлетес,культурăллă сăн-пит кĕртес, терĕç пĕрре Шупашкар хула советĕнче ĕçлекенсем.

Çавăн пекех пĕрре, ик-виçĕ çул кайала ĕнтĕ вăл, хулан Карл Маркс, Ленинградски, Ярославски, Калинин тата ытти урамсене, кашни урамах уйрăмăн пĕрер тесĕ йывăçсем лартса тухрĕç. Акă Карл Маркс урамĕ: унта йăлтах çăка. Ытла илемлĕ йывăç. Лартнă йывăççем тата пурте чĕрĕлчĕç. Ĕçлени тата ку йывăççене лартнă чухне тăкак тăкни усăсăр пулмарĕ пек туйăнчĕ. Хĕпĕртеттерчĕ.

Кăçал апла мар иккен. Кăçалхи çуркуннеренпе хула урамĕсенче темĕн чухлĕ йывăç пĕтрĕ. Çуррине йахăн хуçса тăкрĕç, ытти йывăççене качакасем кăшласа хăртрĕç. Халĕ ĕнтĕ хăшпĕр урамсенче ик-виçĕ çул кайала лартнă йывăççенчен пĕр-икĕ тунката кăна тăрса йулчĕç.

Камран килчĕ-ха ку? Каламасăрах паллă: хула советĕнчен. Хула совечĕ иртнĕ çулсенче хула урамĕсене выльăх-чĕрлĕх кăларса йама йурамани çинчен постановлени йышăнчĕ. Итлемесĕр тăракансене штрафламала турĕ. Ку каланă пек пулса пымарĕ иккен. Шупашкар урамĕсем тăрăх кĕтÿ-кĕтÿпе качакасем çÿреме пуçларĕç, вĕсем тÿрех çамрăк йывăççен турачĕсем çине пăхрĕç. Халĕ ĕнтĕ йывăççене йăлтах кăшласа пĕтерчĕç.

Çавăн пекех кăçал Чапайĕвски посолăкри кашни урама пекех йывăççем лартрĕç. Унта та нумай йывăççене ватса пĕтерчĕç. Анчах пĕлместпĕр, хула совечĕ государствă укçа-тенкине шеллет-ши?

ИВ. МОСЕЙЕВ.

Клуб ĕçне йапăхтарчĕç

Хурамалти (Йĕпреç районĕ) „Красный водник" колхозăн клубĕ йулашки икĕ çул хушшинче питех те йапăхса кайрĕ.

Клуб пуçлăхĕ вырăнĕнче И. Маркăв шутланса тăрать. Маркăв клубра икĕ çул пурăнса та йĕркелĕ ĕçлеме вĕренеймерĕ.

Клуб йалти çамрăксене культмассăллă ĕçе йавăçтарас вырăнне, йаланах хупă тăрать.

Халĕ колхозниксем уйхир ĕçне пуçăнчĕç. Ĕç вăхăтĕнчи культмассăллă ĕçе Маркăвăн йертсе пымала, унăн ку ĕçе комсомолĕçсене йавăçтармала.

Анчах „Красный водник" колхозра культмассăллă ĕçе никам та пуçарса пымасть. Апрел уйăхĕнчех Маркăва çтена хаçат редактăрне суйласа хăварчĕç. Çтена хаçачĕ пайанхи кунччен те пĕр номĕр те тухман. Маркăв ĕç укçи илмели вăхăта кĕтсе çеç пурăнать.

Маркăв малашне клуб пуçлăхĕн вырăнне йышăнса тăма тивĕçлĕ мар.

И. Чангин.

Пулни-иртнисем

○ Автомашинă аварийĕ. Пăрачкав совхозĕнчи шофĕр Н. В. Тутаринăв, ăна пассажирсене турттарса çÿреме права паман пулсан та, ийулĕн 26-мĕшĕнче Шупашкартан 13 çын лартса тухнă, вĕсенчен кашниннченех хăйне валĕçи укçа илнĕ. Автомашинăпа ытлашши хăвăрт пынă пирки, Çĕрпÿ патне çитес чухне, машинă сырмана ÿпĕнсе кайнă. Виçĕ çын аманнă: вĕсене Çĕрпÿ пульницине леçнĕ. Шофĕра арĕсленĕ.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Çитĕнĕве чакарма йурамасть

Укçа-тенкĕ пухасси халăх хуçалăх планне тултарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать. Виççĕмĕш кварталта Шупашкар хулинче 8.168.500 тенкĕ укçа пухмалла. Вăл шутран социалисăмлă хуçалăх предприятисенчен (оборотран илекен налог йĕркипе) 7.180 пин тенкĕ, халăхран пухмали укçа 985,5 тенкĕ шутланать. Анчах та виççĕмĕш квартăл планĕ çителĕксĕр тулса пырать. ЧАССР Верховнай Совечĕн Çĕççийĕ уçăлнă тĕле халăхран укçа-тенкĕ пухас плана 27,5 процент, государствă тупăшĕ йенĕпе 23,6 процент анчах тултарнă. Ку ĕнтĕ хула совечĕн финанс пайĕнче ĕçлекенсем иккĕмĕш квартăлта тунă ĕçсемсенпе лăпланса ларнинчен килчĕ.

Хăшпĕр хуçалăх организацийĕсен руководителĕсемпе бухгалтĕрĕсем бюджета хывмали укçасене хăйсен йенĕпе оборот тунă çеçе расхутланисем пур. Ачасемпе ача амăшĕсен сывлăхне упракан Институт йавăрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ийулĕн 1-мĕшне çитиччен рабочисемпе служащисенчен пухăнnă тупăш налогне 810 тенкĕ те 10 пус, культсбор 889 тенкĕ те 40 пус тытса тăнă. Йустици Халăх Комиссариачĕн бухгалтĕрĕ Суконкин рабочисемпе служащисенчен пухăннă тупăш налогĕпе зайом укçине хăйĕн патĕнче тытса тăнă. Вăл 1937 çулта пухăннă „ССР Союзĕн Оборонине тĕреклетмели Зайом" укçине 5476 тенкĕ, 1938 çулхи пĕрремĕш çурçулта пухăннине 863 тенкĕ тата культсбор укçине бюджета хывмасăр тăнă. Çавăн пекех Суконкин Йустици Халăх Комиссариатĕнчи чылай работниксенчен йĕрке тăрăх тытса йулмали укçасене сахал тытса йулнă йе тата ытлашши тытса йулнă.

Хăшпĕр бухгалтĕрсем хăйсем патĕнче оборот тăрăх пухăнакан налог укçисене тытса тăраççĕ. Механизацилĕ арманти руководителсем çак çулхи 1 мĕш квартăлтан пуçласа тÿлемели укçана 1.298 тенкĕ, Шупашкарти Торгăн пĕрле апатлăнас ĕç уйрăмĕ 1.172 тенкĕ тата пĕрремĕш №-лĕ типографи иккĕмĕш кварталтан пуçласа 6.197 тенкĕ укçана тÿлемесĕр тытса тăраççĕ Нефтесбыт кантуре укçа-тенкĕ планне 22 процент çеç тултарчĕ.

Плана тултарас ĕçре чăрмантарса пыракан тĕслĕхсене темĕн чухлех тупма пулать. Ку ĕнтĕ хăшпĕр хуçалăх организацисенчи руководителсемпе бухгалтĕрсем бюджетăн тивĕçлĕ планне тултарни хуçалăхла культурăлла ĕçсене тума укçа парса тăрас ĕçре тĕп вырăнта тăнине ăнланманнине пĕлтерет.

Ийуль уйăхĕнче епĕр Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома сарас ĕçе иртертĕмĕр, çавăнпа та виççĕмĕш квартăл планĕнче зайом укçи пухасси тĕп вырăнта тăрать. Зайом сарасси рабочисемпе служащисем тата килхуçи хĕрарăмсем хушшинче те пысăк активлăхпа иртрĕ. Шупашкар хули тăрăх августăн 1-мĕшне илсен „ССР Союзĕн Оборонине тĕреклетмелли Зайома" 1.879.425 тенкĕлĕх сарнă пулсан, çĕнĕ зайома çак кун тĕлне 2.350.455 тенкĕлĕх сарнă.

Çĕнĕ зайом организацисенче ĕçре тăман халăх хушшинче те пысăк активлăхпа сарăлчĕ. Ленинград урамĕнчи С. А. Смирновă, Афанасйевă тата Макарăвă йулташсем 1.210 тенкĕлĕх зайом сарса 467 тенкĕ те 50 пус укçа пырса хывнă тата ытти те.

Зайом сарас ĕçе РСФСР тата ЧАССР Верховнай Совечĕсен суйлав кампаниниче хăйсен пултарулăхне кăтартнă активиссем хĕрÿлĕн хутшăнса ĕçленипе иртернĕ. Халĕ ĕнтĕ зайом укçи пухас ĕçе хĕрÿлĕн тытăнмала.

Виççĕмĕш квартăлта Шупашкар хули совечĕн финанс пайĕ финанс планне тултарас ĕçре республикре малта пыракансен шутне кĕчĕ. Анчах хăличчен тунă ĕçсем пире лăплантарма хушмаççĕ. Социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарнипе, общественлă активпа ĕçе хастарлăн хутшăнтарнипе виççĕмĕш квартăлта финанс планне кăтартулăн тултарас, республикăри малти вырăншăн кĕрешмеле.

Шупашкар хула совечĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Калиновскайа.

Шупашкарти Вендиспансер

Венерик чирĕсемпе чирлесрен сыхланма, августăн 5-мĕшĕнчен пуçласа Вендиспансерта

çĕрлехи профилактори уçнă

Профилактори çĕрле 11 сехетрен 2 сехетчен ĕçлет.

Чăвашшвейстрочсойуза

МАШИНИСТКĂ КИРЛĔ

Ĕçунçи килĕшÿ тăрăх.

Адрĕс: г. Чебоксары, улица Калинина, д. № 49. Тел. № 2—85.

ЧĂВАШПРОМКАССАН
Кувшинкăри канмали çуртне

ЙĂЛАН ĔÇЛЕМЕ
бухгалтĕр помошникĕ
ТАТА
грузовой автомашинăпа çÿреме
шофĕр кирлĕ

Çыру йамали адрĕс: г. Чебоксары, абонементный ящик № 3.

Пымали адрĕс: Левый берег Волги, Кувшинка.

АВТОГУЖТРЕСТĂН
УЛАТĂРТИ УЙРĂМĔ
автопокрышкăсене
тата автокамерăсене
ВУЛКАНИЗАЦИ ТУМА
заказ йышăнать

2—2

ШУПАШКАРТИ
ПЕДАГОГИКĂ УЧИЛИШЧИ

1938—39 вĕренÿ çулĕнче вĕренекенсене III-мĕш класа илесси çинчен пĕлтерет

III мĕш класа вăтам шкул пĕтернисене, рабфак пĕтернисене, çичĕшкăлах вăтам шкул программи чухлĕ пĕлÿ илнисене илеççĕ.

Заявленисене августăн 20 мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адрĕс: г. Чебоксары, улица К. Маркса, № 84.

ДИРЕКЦИ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 426.

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 863.